Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июнь 12 эрнекун № 113 (9022)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Калчасене пăхса ÿстерес, тырпул пухса кĕме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес тĕлĕшпе облаçри парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем. КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ Н. А. Шмаков юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă постановлени (1 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Д. Абашев.—Пропагандистсен курсĕсене йĕркеллĕ ирттерер (2 стр.).

А. Соловьев, В. Михайлов. — Парти райкомĕн пленумĕсенче (2 стр.).

ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНИ: Новаторсен опытне анлăн сарассишĕн (2 стр.).

Л. Терентьев.—Вырăсла-чăвашла словарь (3 стр.).

Н. Петров.—Вăрлăх участокĕсенчи тырпула лайăх пăхса ÿстерер (3 стр.).

ФЕЛЬЕТОН: В. Ухрууль. — Баланс тунă хыççăн... (3 стр.).

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕнче (4 стр.).

Италири парламент суйлавĕ (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем (4 стр.).

Паньмыньчжоньри лару çинчен Корейăпа Китай делегацийĕ пĕлтерни (4 стр.).

Калчасене пăхса ÿстерес, тырпул пухса кĕме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес тĕлĕшпе облаçри парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем

КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ Н. А. Шмаков юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă постановлени

«Калчасене пăхса ÿстерес, тырпул пухса кĕме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес тĕлĕшпе облаçри парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем» çинчен КПСС обкомĕн секретарĕ Н. А. Шмаков юлташ тунă доклада итлесе сÿтсе явнă хыççăн КПСС Чăваш обкомĕн V-мĕш пленумĕ çакна палăртать: партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем тăрăх ĕçлесе, республикăри ялхуçалăх ĕçченĕсем 1953 çулхи çуракине иртнĕ çулхисенчен йĕркеллĕрех тата лайăхрах ирттерчĕç. Кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсемпе пăрса йышши культурăсем акмалли плана республика 100,7 процент, вăл шутра çурхи тулă акмалли плана 106,7 процент тултарнă. Республикăри колхозсем нумай çул ÿсекен курăксем, пĕр çул ÿсекен курăксем, выльăх кăшманĕсем тата силос культурисем акмалли плана тултарчĕç.

Комсомольски, Чкаловски, Канаш, Красноармейски, Шупашкар тата Чурачăк районĕсем кĕрхи культурăсене уйрăмах кĕске срокенче тата пысăк пахалăхпа акса хăварчĕç.

Çавăнпа пĕрлех пленум çакна палăртать: КПСС обкомĕн бюровĕ, республика Министрĕсен Совечĕ, Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви çураки планне республикăри пур районсенче те агротехника кăтартнă чи лайăх срокенче тата мĕнпур культурăсем тăрăх тултарса çитермелле тăвайман. Кăçалхи июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне çуртрисем акмалли плана республикăра пурĕ 97,7 процент кăна тултарнă, вăл шутра кантăр 85,6 процент кăна, йĕтĕн—79,2 процент, çĕрулми—93 процент, пахча çимĕçсем—41,1 процент, махорка—8,4 процент акнă.

Улатăр, Пăрачкав, Тăвай, Çĕмĕрле тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи нумай колхозсем çуракине уйрăмах начар ирттернĕ. Чылай районсенче агротехникăна хытах пăсни те пулнă.

Обком пленумĕ çакна палăртать: республикăри МТС-сем кăçал хăйсен ĕçне пăртак лайăхлатрĕç, çуракинче тракторсене йĕркеллĕ ĕçлеттерчĕç, тракторпа тунă ĕçсен хисепĕ ÿсрĕ тата çуракинчи ĕçсене ытларах механизацилерĕç. Анчах республикăри чылай МТС-сем çаплах çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха, çавна пула МТС-сене çураки вăхăтĕнче ĕçлеме государство кăтартса панă плана уйрăм ĕçсем тăрăх тултарайман. Республикăри машинатрактор станцийĕсенче, трактор паркĕн ĕç тухăçлăхĕ пысăк мар-ха. Нумай МТС-сенче тракторсемпе пĕр смена çеç ĕçлеççĕ, трактористсенчен чылай пысăк пайĕ сменăри ĕç нормисене тултарса пымасть, техникăлла сăлтавсемпе ытти сăлтавсене пула тракторсем нумай вăхăт ĕçлемесĕр тăраççĕ, колхозсемпе тунă договорти обязательствăсене пурнăçласа пымаççĕ.

Çуракинчен пушаннă тракторсемпе лашасене çийĕнчех сĕртме тума куçарман тата вĕсемпе тухăçлă ĕçлеймен пирки республикăри нумай колхозсенче сĕртме тăвас ĕç начар пырать. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне сĕртме тумалли плана республикăра 47,9 процент кăна тултарнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Етĕрнĕ, Чурачăк, Шăхасан, Хĕрлĕ Чутай, Йĕпреç, Сĕнтĕрвăрри тата Канаш районĕсем юлса пыраççĕ. Сĕртме пуссине тислĕк, торф тата выранти ытти удобренисем сахал кăлараççĕ. Известь чулĕ нумай тупма пулать пулсан та, нумай колхозсенче йÿçĕк тăпрана извĕçлес ĕçе организацилемен.

Чылай районсенче парти, совет тата ялхуçалăх органĕсем калчасене пăхса ÿстерес ĕçе начар организациленĕ, çум çумлас тата касă тăрăх акакан культурăсен рет хушшисене кăпкалатас ĕçсене вĕсен туса пыраççĕ, ку ĕçре МТС техникипе тата колхозсен лашапа ĕçлемелли хатĕрĕсемпе начар усă кураççĕ, уйхирте тырпула сиен тăвакан хурт-кăпшанкăсем курăнма пуçланă пулин те, вĕсене хирĕç кирлĕ пек кĕрешмеççĕ.

Республикăра утă çулма тата силос хывма хатĕрленес ĕç ытла та начар пырать, çакă вăл, кирлĕ таран выльăх апачĕ хатĕрлеймен пирки, ÿссе пыракан обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк чăрмав пулма пултарать.

КПСС обкомĕн пленумĕ çакна палăртать: республикăри парти, совет тата ялхуçалăх органĕсем иртнĕ çулхи урока—тырпул пухса кĕме начар хатĕрленнĕ пирки нумай колхозсенче пысăк тăкаксем пулнине шута илмен, кăçал çавăн пек фактсем ан пулччăр тесе кирлĕ ĕçсене тумаççĕ. Çавна пула республикăри МТС-семпе колхозсенче комбайнсене, молотилкăсене, тырă тасатмалли машинăсене, лашапа ĕçлемелли машинăсене, алăпа ĕçлемелли хатĕрсене, транспорт хатĕрĕсене юсас ĕç ытла та ерипен пырать. Чылай МТС-сенче (Чкаловски, Шăмăршă, Вăрнар МТС-сем) туман ĕçсене отчетсенче хушса çыраççĕ, комбайнсене, молотилкăсене тата тырпул пухса кĕмелли ытти машинăсене начар юсаççĕ. МТС-семпе колхозсен машинисем çинче ĕçлеме кадрсем хатĕрлес тата суйласа илес ĕç юлса пырать. Нумай колхозсенче витнĕ итемсем, авăнсем, зерносушилкăсем, тырпул хумалли складсем тăвас тата вĕсене юсас ĕçе организацилемен.

Обком бюровĕ, Министрсен Совечĕ, Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерстви, КПСС райкомĕсемпе райисполкомсем МТС-сенче комбайнсене, молотилкăсене, жаткăсене, утă çулмалли машинăсене юсамалли плана мĕнле тултарса пынине тата юсанин пахалăхне, çавнашкалах колхозсенче тырпул пухса кĕмелли машинăсемпе хатĕрсене юсаса тирпейлени кирлĕ пек тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Парти, совет тата ялхуçалăх органĕсем ялхуçалăхне малалла механизацилес, сăмахран, улăма улăмурине хывас ĕçе механизацилес, механизациленĕ итемсем тăвас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, ку тĕлĕшпе малта пыракан колхозсен опытне ытла та сахал сараççĕ.

Снабженипе суту-илÿ организацийĕсем республикăна запаслă пайсем, машинăсене юсанă чухне кирлĕ материалсем, михĕсем, горючи тата сĕрмелли материалсем вăхăтра илсе килмен.

Государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрлес ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур. Республикăри «Заготзерно» кантурĕ, Чăвашпотребсоюз складсем, овощехранилищĕсем, зерносушилкăсем, тырпул тасатакан машинăсем, тарасемпе лаборатори хуçалăхĕ тата складсем патне пымалли çулсем тăвас тата вĕсене юсас тĕлĕшпе ытла та çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

КПСС райкомĕсем нумайăшĕ колхозсенчи, МТС-сенчи тата совхозсенчи парторганизацисен ĕçне лайăхлатас, вĕсен хуçалăх ĕçĕсенчи ролĕне ответлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ, партиллеполитикăлла ĕçе йĕркелесе яма вĕсене кирлĕ пек пулăшу памаççĕ. Çавна пула пуçламăш парторганизацисем нумайăшĕ партилле-политикăлла ĕçе хуçалăх ĕçĕпе япăх çыхăнтарса пыраççĕ, колхоз правленийĕсем, МТС-семпе совхозсен дирекцийĕсем мĕнле ĕçленине контроль тумалли правăпа начар усă кураççĕ, халăх хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе çителĕклĕ ертсе пымаççĕ.

Парти, совет тата ялхуçалăх органĕсен ĕçĕнче социализмла ăмăртăва ертсе пырас тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур.

КПСС райкомĕсемпе райисполкомсем, колхозсемпе МТС-сенчи парти организацийĕсем нумайăшĕ ялхуçалăх ĕçченĕсем 1953 çулта йышăннă социализмла обязательствăсене мĕнле пурнăçланине начар тĕрĕслесе тăраççĕ. Çавна пула республика ялхуçалăхĕнчи чылай ĕçсем тăрăх ăмăртакан тăванла республикăсенчен иртнĕ çул та юлса пычĕ, кăçал та юлса пырать.

Республикăри «Советская Чувашия» тата «Коммунизм ялавĕ» хаçатсем, çавнашкалах районти хаçатсем те районсемпе колхозсен социализмла ăмăртăвне начар çутатса тăраççĕ, ăмăртура мала тухнисен опычĕ тата агрономи науки тунă çитĕнÿсем çинчен сахал çыраççĕ.

КПСС обкомĕн пленумĕ çапла йышăнать:

1. Облаçри парти организацийĕ умĕнче çакăн пек чи паха хуçалăхпа политикăлла задача тăрать тесе шутлас: кăçал калчасене питĕ тĕплĕ пăхса ÿстерсе, пур ялхуçалăх культурисенчен те пысăк тухăçлăх илмелле, сĕртме сухине правительство кăтартнă срокра тумалла тата çĕре лайăх ĕçлемелле, утă çулас, силос хывас ĕçсене лайăх организацилемелле, обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлемелле, тырпул пухса кĕме вăхăтра хатĕрленсе, ăна лайăх тата нимĕн тăкакламасăр пухса кĕртмелле, государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана срокчен тултармалла, кашни колхоз хăйне кирлĕ таран пахалăхлă вăрлăх хывса хăвармалла, колхозсенче выльăх апачĕн фончĕ, страховой фонд тата ытти обществăлла фондсем тумалла, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх паракан тырпул тата укçа хисепне ÿстермелле.

2. Пленум КПСС обкомĕн бюровне тата республика Министрĕсен Советне государство панă çураки планне республикăри пур районсенче те пĕтĕмпех тултарма кирлĕ пур ĕçсене те тума хушать. Техникăлла культурăсен, çĕрулми тата пахча çимĕçсен акса-лартса хăвармалли плана тултарас тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕн ĕçлемелле.

3. Республикăн Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата унăн выранти органĕсене, КПСС райкомĕсене, райисполкомсене, колхоз правленийĕсемпе колхозсенчи парторганизацисене çапла тума хушас:

а) сĕртме тумалли плана пур колхозсенче те июнĕн 10-мĕшĕнчен тултармалла, çĕре вăхăтра ĕçлесе, сĕртме пуссине кăпка тата сумкурăксенчен таса тытмалла. Сĕртме пуссине акнă культурăсене кая юлмасăр пухса кĕмелле. Кĕрхи тырăсем акмалли çĕре акма тухиччен виçĕ эрне маларах хатĕрлесе çитермелле. Уйхире тислĕк, торф тата выранти ытти удобренисемпе минераллă удобренисем кăлармалли плана, çавнашкалах, выранта тупăнакан известь чулĕсемпе анлăн усă курса, йÿçĕк тăпрана извĕçлемелли плана тултармалла;

б) калчасене, уйрăмах техникăлла культурăсен, касă тăрăх акакан культурăсен калчисене тата вăрлăхлăх акнă курăксене, лайăх пăхса ÿстермелле, çум çумлас, кăпкалатас тата купалас ĕçсене кая хăвармалла мар, калчасене апат памалла, тырпула сиен тăвакан хурткăпшанкăсемпе тата чирсемпе кĕрешмелле, ялхуçалăх культурисене, чи малтан пахча çимĕçсемпе махоркăна шăварас ĕçе анлăн туса пымалла. Калчасене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене тума колхозсенче ĕçлеме пултаракан çынсене пурне те ĕçе хутшăнтармалла, транспорт хатĕрĕсемпе тата лашапа ĕçлемелли хатĕрсемпе анлăн усă курмалла, çак ĕçре ĕçлекен трактористсемпе колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилесе, ĕçленĕшĕн тĕрĕс тÿлемелле;

в) колхозсенче вăрлăх туса илес ĕçе хакламаннине пĕтермелле. Июнĕн 20-мĕшĕнчен вăрлăх участокĕсем уйăрнине тата вĕсем мĕнле участоксем пулнине пур çĕрте те тĕрĕслемелле. Вăрлăх тума акнă уйрăм участоксем çук колхозсенче вĕсене кашни культура тăрăх, правительство кăтартса панă нормăпа, тырă пуссинчех уйăрса хумалла. Вăрлăх участокĕсенчи тырпула уйрăмах тĕплĕ пăхса ÿстермелле. Сортлă тырпула апробаци тумалла, вăрлăх участокĕсенчи тырпула ытти тырпултан уйрăм пухса кĕртмелле, уйрăм капана хывса, уйрăм çапмалла, вăрлăхлăх тырра пĕтĕмпех сыхласа усрамалла, çапла вара 1954 çулта пур колхозсен те хăйсен туса илнĕ вăрлăх çителĕклĕ пулмалла. Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ вăрлăхлăх тырăпа, акнисĕр пуçне, мĕнле те пулин урăх ĕçре усă курма чармалла.

4. Пленум КПСС обкомĕн бюровне, республика Министрĕсен Советне, КПСС райкомĕсене тата райисполкомсене, ялхуçалăхĕпе хатĕрлев органĕсем тата колхоз правленийĕсем тырпул пухса кĕме тата государствăна тырă пама мĕнле хатĕрленнине куллен тĕрĕслесе тăма тата çав ĕçсене пысăк пахалăхпа туса ирттерме хушать. Государствăна тырă памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултармалла.

5. Тырпул пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсене лайăх туса ирттерес тесе, Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата унăн выранти органĕсене, КПСС райкомĕсене, райисполкомсене, МТС-семпе колхоз руководителĕсене тата вĕсенчи парторганизацисене çапла тума хушас:

а) комбайнсене, молотилкăсене тата тырпул пухса кĕмелли ытти машинăсене 1953 çулхи июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне юсаса çитерме кирлĕ ĕçсене тумалла, юсанин пахалăхне куллен тĕрĕслесе тăмалла. Тырпул тăкаланса пĕтесрен комбайнсен тата тырпул пухса кĕмелли ытти машинăсен зерноуловительсем тата вырттă тырра, вăрлăх участокĕсене, вирпе хуратула пухса кĕмелли хатĕрсем, сложнăй молотилкăсен—клевер вăрри шĕкĕлчекен хатĕрсем пулмалла, комбайнсене чармасăрах пушатма кирлĕ транспорт хатĕрĕсем вăхăтра хатĕрлемелле. Тырпул пухса кĕртме тухиччен уй-хирте комбайнпа пухса кĕмелли участоксене уйăрса хумалла, комбайнсемпе тракторсене ĕçлеме палăртнă выранпа вăхăтра илсе пымалла. Колхозсенче тараса хуçалăхне, михĕсене, транспорт хатĕрĕсене тата тырпул пухса кĕмелли хатĕрсене тирпейлесе çитермелле;

б) комбайн агрегачĕсем çинче ĕçлекен комбайнерсене, комбайнер помощникĕсене, трактористсене, молотилкăпа, йĕтĕн таткан машинăпа тата тырă тасатакан сложнăй машинăпа ĕçлекен машинистсене вăхăтра палăртса хумалла, çавнашкалах тырпул пухса кĕртекен агрегатсем патĕнче ялан ĕçлеме колхозниксене уйăрмалла, вĕсене урăх çĕре ĕçлеме ямалла мар. Трактор хыççăн пыракан тата самоходнăй комбайнсем çинче ĕçлекен, сложнăй молотилкăпа, жаткăпа, йĕтĕн таткалли машинăпа ĕçлекен кадрсем çитменсен, вĕсене курссенче вĕрентсе хатĕрлемелле. МТС-семпе колхозсенче весовщиксене вăхăтра уйăрмалла;

в) кирек мĕнле çанталăкра та авăн çапма тата государствăна тырă пама май пултăр тесе, витнĕ итемсем, лупасăйсем тăвас тата юсас ĕçе, тырра, çĕрулмине, пахча çимĕçсене тата тымарçимĕçсене вăхăтра тасатса тирпейлеме тата типĕтме, вĕсене лайăх сыхласа усрама çителĕклĕ таран зерносушилкăсем, овощехранилищĕсем, зернохранилищĕсем тăвас тата вĕсене хăвартлатма кирлĕ ĕçсем тумалла, вĕсене тасатмалла, колхозсенчи сушилкăсене пĕр чарăнми ĕçлеттерме вутă хатĕрлемелле;

г) тырпул пухса кĕме тухиччен 15 кун маларах кашни колхозра, МТС-ра тата совхозра, çавнашкалах пур уй-хир бригадисемпе трактор бригадисенче те тырпул пухса кĕмелли, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем леçсе памалли ĕç планĕсем тумалла, çав плансенче тырпул пухса кĕнĕ вăхăтра колхозсен, МТС-сен, совхозсен мĕнпур вăйĕсемпе тата ĕç хатĕрĕсемпе туллин те тĕрĕс усă курма палăртмалла. Ĕç планĕсене колхозниксен, МТС-семпе совхозсенче ĕçлекен рабочисен пухăвĕсенче сÿтсе явмалла, çапла вара çак хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче кашни колхозник, тракторист, комбайнер, совхозри кашни рабочи хăйĕн выранне, заданине, ĕç пахалăхĕ мĕнле пулмаллине тата ĕçе тумалли срока пĕлсе тăтăр. Уй-хир бригадисемпе трактор бригадисен ĕç планĕсене пĕр-пĕринпе çирĕп килĕштерсе тумалла, çакă вăл республикăри малта пыракан колхозсен примерĕ тăрăх тырпул пухса кĕнĕ тата государствăна тырă панă вăхăтра МТС-сен трактор бригадисемпе колхозсен уй-хир бригадисем хушшинчи ĕçлĕ туслăха çирĕплетме май парать.

Тырпул пухса кĕме тухиччен 15 кун маларах колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем тырпул пухса кĕме тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕр тăнине пур çĕрте те тĕрĕслесе тухмалла, тĕрĕсленин результачĕсене парти райкомĕсенче, райисполкомсенче пăхса тухмалла, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме çийĕнчех кирлĕ ĕçсене тумалла;

д) тырпул пухса кĕме тата авăн çапма вăхăтра тытăнмалла, кашни колхозра, кашни совхозра тырпула чи кĕске срокра пухса кĕрсе, государствăна тырă памалли плана срокчен тултармалла. Çакна тума тырпул пухса кĕме тухсан малтанхи кунсенчех комбайнсене, жаткăсене, лобогрейкăсене, молотилкăсене тата МТС-сенчи, колхозсенчи, совхозсенчи тырпул пухса кĕмелли ытти машинăсене пурне те ĕçе ямалла, тырпул пухса кĕнĕ вăхăтра кашни комбайнерăн, молотилка машинисчĕн, колхозникăн, совхозри рабочин ĕç нормине пĕрмаях тата куллен тултармалла тата ирттерсе тултармалла.

Колхоз тупăшĕсене ĕçкунĕсем тăрăх бригада туса илнĕ тырпул тухăçлăхне кура тĕрĕс валеçес тесе, тырпул тухăçлăхне бригадăсем тăрăх уйрăм шута илмелле. Уйрăмах вăрлăхлăх акнă курăксене вăхăтра пухса кĕме тăрăшмалла, сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕсене çапса тирпейлемелле;

е) тырпул уй-хирте чухне, пухса кĕнĕ вăхăтра, çапнă чухне, турттарса кайнă тата пăхса усранă вăхăтра тăкаланса пĕтнине хирĕç куллен кĕрешмелле, çавăнпа та тырă вырнă хыççăнах кĕлте çыхса, вĕсене çĕмеле хывса пымалла, вырнă тырра кĕлте çыхса çĕмеле хывмасăр уй-хире хăварни пулмалла мар, вырнă тырра вăхăтра капана хывмалла тата çапмалла. Çапнă чухне тырă çапăнмасăр ан юлтăр тесе, комбайнсемпе молотилкăсене тĕрĕс йĕркелемелле, нÿрлĕ тырра çийĕнчех типĕтмелле тата тасатмалла. Итем çинче тырă тасатас, типĕтес, виçес тата тиес ĕçсене механизацилемелле. Тырпула уй-хирте чухне те, пухса кĕнĕ вăхăтра та, çапнă тата турттарса кайнă чухне те лайăх сыхламалла, çавăнпа та кашни колхозра, кашни совхозра сторожсем, весовщиксем, тырă турттаракансем пулса ĕçлеме чи лайăх колхозниксемпе совхозри рабочисене уйăрса илмелле. Авăн çапнă вăхăтра тырă талăкĕпех хурал тăмалла тата пушартан сыхламалли йĕркесене пăхăнса ĕçлемелле;

ж) выльăх апачĕ пулса тăракан улăмпа арпана пухса илес тесе, колхозсенче тырпула комбайнпа пухнă вăхăтрах улăмпа арпана пĕтĕмпех пухса улăм урине хывмалла, çакна чи малтан выльăх-чĕрлĕх валли симĕс апатлăх кĕрхи ыраш акмалли тата кĕрхи сĕртме тумалли участоксенче тумалла. Ку ĕçе тума колхозниксене тата кирлĕ таран транспорт хатĕрĕсемпе туртăм вăйĕ уйăрса памалла. Улăмпа арпана пухса улăм урине хывас ĕçе комплекслă механизацилемелле, çакна тума тырпул пухса кĕме тухиччен МТС-семпе колхозсен вăйĕпе тросла тата сĕтĕрĕнекен волокушăсем, улăмури купаламалли, капан хывмалли çĕмĕл хатĕрсем тумалла;

з) тырпул пухса кĕме тухсан малтанхи кунсенчех государствăна тырă пама тытăнмалла, государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултариччен кашни колхоз, кашни совхоз куллен тырă парса тăмалла. Государствăна тырă леçме кашни колхозра чи лайăх колхозниксенчен транспорт бригадисем организацилемелле.

МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлемелли плана вăхăтра тултарас тесе уйрăмах тимлĕ ĕçлемелле.

Хуçалăхра тыткалама тата колхозниксене аванс пама тырпул расходлас тĕлĕшпе правительство йышăннă йĕркесене мĕнле тытса пынине çирĕп контроль туса тăмалла. Çав йĕркесене пăхăнмасăр колхоз продукцине колхоз производствине хутшăнман çынсене валеçсе пĕтерни, çавнашкалах мисе ĕçкунĕ тунине пăхмасăрах аванс пани пулмалла мар.

Колхоз тупăшне тĕрĕс валеçнине тата унпа тĕрĕс усă курнине çирĕп контроль туса пымалла. Государствăна тырă парса татнă хыççăн кашни колхозра колхоз производствине анăçлă аталанма кирлĕ таран вăрлăх фончĕ, выльăх апачĕн фончĕ, страховой фонд тата ытти обществăлла фондсем тумалла;

и) государствăна тырăпа пĕрлех çĕрулми, пахча çимĕçсем, техникăлла культурăсем парас ĕçе организацилемелле. Йĕтĕнпе кантăра тирпейлемесĕрех хĕле хăварас сиенлĕ йĕркене пĕтермелле. Октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр йĕтĕне сарса пултармалла, кантăра шыва хутса кăлармалла, декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне йĕтĕнпе кантăра тирпейлесе çитермелле. Махоркăпа хăмлана вăхăтра пухса кĕртсе государствăна памалла.

6. Государствăна паракан тырăпа ытти ялхуçалăх продукчĕсене пĕр чарăнми йышăнса тăрас, вырнаçтарса курас тата пĕтĕмпех лайăх сыхласа усрас ĕçсем калама çук пысăк выранта тăнине шута илсе, Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, республикăри «Заготзерно» кантурне, Чăвашпотребсоюза, КПСС хула комитечĕсемпе райкомĕсене, хула исполкомĕсемпе райисполкомсене çапла тума хушас: июнĕн 10-мĕшĕнчен складсене, зерносушилкăсене, михĕсене, тырă тасатакан машинăсене, тарасене, лаборатори оборудованине туса тата юсаса çитерсе, пĕтĕмпех хатĕр тытмалла, Чăвашпотребсоюзăн тата ялхуçалăх продукчĕсемпе чĕртаварĕсем хатĕрлекен ытти организацисен склачĕсемпе овощехранилищисене июнĕн 20-мĕшĕнчен хатĕрлесе çитермелле.

Хула Совечĕсен исполкомĕсемпе райисполкомсен Заготзерно пунккĕсемпе ытти хатĕрлев организацийĕсене пурлăхшăн ответлă вырансене шанчăклă кадрсем суйласа илме пулăшмалла, складсене, складсем патне пымалли çулсене юсама, тырăпа ялхуçалăх продукчĕсене сыхласа усрас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем валли ĕç вăйĕ тата выранти строительство материалĕсем уйăрса памалла, çавнашкалах инçетри вырансенчен тырă турттарса тухма пулăшмалла.

7. КПСС обком бюровне, республика Министрĕсен Советне, Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине, КПСС райкомĕсемпе райисполкомсене обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пур колхозсемпе районсенче те тултарма кирлĕ ĕçсене васкаса тума хушас. Çакна тума выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхса усрамалла, выльăхсем вилни пулмалла мар, выльăх-чĕрлĕх салатса пĕтерме памалла мар, хăйсем ĕрчетекен выльăх-чĕрлĕх хисепĕ плана тултарма çитмен колхозсенче выльăх туянма халех контрактаци тумалла тата сутăн илмелле.

Çавăнпа пĕрлех обществăлла выльăх-чĕрлĕхрен, уйрăмах ĕнесенчен продукт ытларах илме кирлĕ ĕçсене тумалла.

8. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата унăн выранти органĕсене, КПСС райкомĕсемпе райисполкомсене, колхоз правленийĕсемпе колхозсенчи парторганизацисене, МТС руководителĕсене утă çулас тата силос хывас ĕçсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа тума, тырпул пухса кĕме тухиччен утă çулса пĕтерсе, государствăна утă пама, планра кăтартнинчен 80 процентран кая мар силос хывма хушас. Колхозсенче иккĕмĕш хут утă çулса илмелле. Утă çулнă тата силос хывнă чухне утă çулмалли, силос турамалли машинăсемпе пурине те тухăçлă усă курмалла, утта лайăх çулса пуçтарнине, ăна вăхăтра йышăннине, вăрласа пĕтересрен тата пушартан сыхланине çирĕп контроль туса тăмалла.

Йышăнса пыракан обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат ытларах хатĕрлес тесе, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз, Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхоз тата Чăваш республикинчи селекци станцийĕн примерĕ тăрăх, сĕртме пуссине выльăх апачĕ тумалли культурăсем—симĕс апатлăх кĕрхи ыраш, пăрса, викăпа сĕлĕ хутăш акма, çĕрулми лартма кирлĕ тесе шутлас.

КПСС обкомĕн бюровне, республика Министрĕсен Советне республикăри колхозсенче курăк акмалли пусă çаврăнăшĕсем хăвартрах тумалли майсем çинчен Чăваш республикинчи селекци станцийĕ панă сĕнĕве пăхса тухма хушас.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх витисем, кормокухнисем тумалла тата юсамалла, çак ĕçсене 1953 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса çитермелле. Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе механизацилеме кирлĕ ĕçсене тумалла.

9. Республика выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе юсса пынине палăртса, пленум КПСС обкомĕн бюровне, республика Министрĕсен Советне, Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлекен ытти организацисене, çавнашкалах КПСС райкомĕсемпе райисполкомсене выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе вăйлатма, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлемелли плана социализмла обязательствăсенче йышăннă срокра — ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма хушать.

10. Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствипе Главнефтесбыт управленине республикăна тата МТС-сен базисене горючи, сĕрмелли материалсем, локомобильсене ĕçлеттерме кирлĕ топливо вăхăтра кÿрсе килме хушас, тырпул пухса кĕртме, тырă леçме тата тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтри ытти ĕçсене тума кÿрсе килнĕ нефть продукчĕсене мĕнле расходланине çирĕп контроль туса тăмалла, вĕсене урăх çĕре расходлама памалла мар.

МТС-сен руководителĕсене нефть продукчĕсемпе сĕрмелли материалсене расходлас ĕçре çирĕп йĕрке тума, вĕсене тирпейсĕр салатса пĕтерме чарса, перекетлĕ расходлама хушас.

11. Республикăн Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствин материально-техникăлла снабжени управленине, Автотрактороснабсбыта тата Чăвашпотребсоюз правленине лаша вăйĕпе тырпул пухса кĕртмелли машинăсем, ялхуçалăх инвентарĕ, запаслă пайсем тата машинăсене юсамалли материалсем, тырпул пухса кĕртмелли ытти вак инвентарь тата оборудовани вăхăтра кÿрсе килме хушас. Ялсенче куллен кирлĕ таварсем сутас ĕçе лайăхлатмалла.

12. Республикăри нумай колхозсенче çуллахи массăллă ĕçсем вăхăтĕнче ача яслисемпе площадкисем организацилемен-нине тĕрĕс мар тесе шутлас, çакă вăл чылай хĕрарăм-колхозницăсене ĕçе хутшăнассине чакарать.

КПСС райкомĕсемпе райисполкомсене, Сывлăх сыхлав министерствисене, колхоз правленийĕсене, ачаллă колхозницăсем тырпул пухса кĕме активлă хутшăнччăр тесе, колхозсенче ача яслисемпе площадкисем организацилеме хушас.

13. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министерствине тата унăн выранти органĕсене, КПСС райкомĕсемпе райисполкомсене, колхозсемпе МТС-сен руководителĕсене, вĕсенчи парторганизацисене кĕрхи тырăсем акас, кĕрхи сĕртме тăвас, çĕрулми, выльăх кăшманĕсем, пахча çимĕçсем пухса кĕртес ĕçсене тата 1953 çулхи кĕркунне тумалли ытти ялхуçалăх ĕçĕсене те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерме хушас.

14. Пленум обком бюровне тата КПСС райкомĕсене колхозсемпе МТС-сенчи парти организацийĕсене ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, партилле-политикăлла ĕçĕн шайне ÿстерме, колхозлă ялăн мĕнпур вăйне 1953 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене анăçлă ирттермешкĕн мобилизацилеме хушать.

Ку тĕлĕшпе:

а) парти, комсомол, совет тата ялхуçалăх органĕсен кадрĕсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, коммунистсен колхозсемпе МТС-сен пурнăçĕнчи ответлăхне, пуçарулăхне тата малта пырас ролне ÿстермелле;

б) ялта массăлла-политикăлла ĕçе вăйлатмалла, ялти агитаторсен, партипе совет ĕçĕнчи ертсе пыракан работниксен тата интеллигенци вăйĕпе куллен агитаци тумалла;

в) колхозниксем, колхозницăсем, механизаторсем хушшинче культурăллă ĕçе лайăхлатмалла. Культурăпа сутăç учрежденийĕсен ĕçне, халăха кино кăтартас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем тумалла. Массăлла-политикăлла ĕçре радиопа тата хаçат-журналсемпе анлăн усă курмалла.

г) колхозниксем, механизаторсем, производство бригадисем, колхозсем, МТС-сем, районсем хушшинче пур ялхуçалăх ĕçсене те вăхăтра туса ирттерессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăрту сарса ямалла. Социализмла ăмăрту ĕçлени çинчен пурне те пĕлтерсе тăмалла, ку ĕçре нагляднăй агитаципе пур майсемпе те, стена хаçачĕсемпе, боевой листоксемпе, районти тата республикăри хаçатсемпе анлăн усă курмалла.

КПСС обкомĕн пленумĕ мĕнпур коммунистсене, комсомолецсене, колхозниксене колхозницăсене, МТС-семпе совхозсенче ĕçлекенсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене калчасене лайăх пăхса ÿстерме, вăйлă тырпул çитĕнтерме, ăна кĕскĕ срокра тăкаламасăр пухса кĕме, ялхуçалăх продукчĕсене парас тĕлĕшпе Тăван çĕршыв умĕнчи патриотла тивĕçе тÿрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртме тата виçĕ тăванла республика хушшинчи ăмăртăвĕнче малти выранна тухма пĕтĕм вăй хурса ĕçлеме чĕнет.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пропагандистсен курсĕсене йĕркеллĕ ирттерер

Партин XIX-мĕш съезчĕ, марксизм-ленинизма пропагандăлас ĕçри, пĕтĕм идеологилле ĕçри çитменлĕхсене палăртса, парти организацийĕсене çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, кадрсен идейăлла-политикăлла хатĕрленĕвне тăтăшах лайăхлатса пыма, Коммунистсен партийĕн теорийĕпе историне вĕренсе алла илес ĕçри ответлăха ÿстерме хушса хăварчĕ.

Пирĕн республикăри парти организацийĕсем, КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа, пропаганда ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Парти вĕренĕвĕнчи итоглă занятисем çулталăк хушшинче нумай коммунистсем хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене чылай ÿстерни çинчен, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене, парти историйĕпе теорийĕн ыйтăвĕсене тĕплĕн вĕренсе пыни çинчен калаççĕ. Пиншер коммунистсемпе партире тăман юлташсем кружоксенче тата харпăр хăй тĕллĕн те И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенине пысăк çĕкленÿпе вĕренчĕç.

Анчах КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсем коммунистсен марксистла-ленинла вĕренĕвне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те туман-ха. Парти обкомĕн V-мĕш пленумĕ кăтартса панă тăрăх, хăшпĕр районсенче (сăмахран, Муркаш районĕнче) ертсе пыракан работниксен политикăлла вĕренĕвĕ çителĕксĕр пулса пырать, унта хăшпĕр работниксем вĕренме пачах пăрахнă.

Парти вĕренĕвĕнчи пысăк çитменлĕхсем пуринчен ытла партин хăшпĕр комитечĕсем пропагандистсемпе кирлĕ пек ĕçлеменнинчен, вĕсен ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслесе тăнинчен, вĕсене теорипе методика тĕлĕшпе пулăшу паманнинчен килнĕ.

Партин хăшпĕр райкомĕсемпе хула комитечĕсем пропагандистсене суйласа илсе ĕçе вырнаçтарнипех лăпланса лараççĕ, кашни политшкулпа кружок руководительне семинарсенчи вĕренĕве хутшăнтарма тăрăшмаççĕ. Çĕрпÿ районĕнчи политшкулсемпе кружоксен руководителĕсем нумайăшĕ вĕренÿ çулĕнче семинар занятийĕсенче ик-виçĕ хутчен кăна пулнă, хăшпĕр пропагандистсем вара занятисене пĕрре те пыман.

Парти вĕренĕвĕнче ĕçлекен пропагандистсен составĕ юлашки вăхăтра чылаях лайăхланчĕ. 4.386 пропагандистпа консультантран 2.595 çын аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Çак фактран хăшпĕр çĕрте сиенлĕ вывод тăваççĕ: халĕ ĕнтĕ пропагандистсем нумай вĕреннĕ çынсем, çавăнпа та теорипе методика тĕлĕшĕнчи пĕлĕвĕсене ÿстерме тăрăшни кирлех мар, теççĕ. Çав вăхăтрах пропагандистсен ĕçне тивĕçлипе тĕрĕслени çук. Çакă вара хăшпĕр пропагандистсене лăплантарать, вĕсем хăйсен теорипе методика тĕлĕшĕнчи пĕлĕвĕсене ÿстерме пăрахаççĕ, ĕçре идеологилле йăнăшсем те тăваççĕ. Коммунистсен марксизм-ленинизм теорине вĕренес кăмăлĕ, вĕсен политикăлла тавракурăмĕ пĕрмаях ÿссе пынине яланах асра тытас пулать. Çакна май пропагандистсен ответлăхĕ ÿсет, вĕсене хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерсе пыма хушать.

Пропагандистсене вĕрентмелли тата вĕсен пĕлĕвĕсене ÿстермелли паха услови суллахи вăхăтра ирттерекен курссем пулаççĕ. Кăçал КПСС обкомĕ çумĕнче уйăхлăх курссем организацилеççĕ, вĕсенче 360 пропагандист—политшкулсен, кружоксен, семинарсен руководителĕсем тата каçхи партшкулсенче ĕçлекен преподавательсем вĕренмелле. Курссенче занятисем июнĕн 15-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Курссем ирттернин тĕллевĕ — пропагандистсене марксизм-ленинизм теорине, Коммунистсен партийĕн политикине, пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсене тĕплĕн ăнланса илме пулăшасси, политшкулсемпе кружоксенчи вĕренĕве мĕнле йĕркелемелли çинчен консультаци парасси пулать. Кунсăр пуçне, пропагандистсене хуçалăхпа культура строительстви тĕлĕшпе республикăри парторганизаци умĕнче тăракан задачăсемпе паллаштараççĕ. Курссенче вĕренни пропагандистсене политшкулсемпе кружоксен ĕçне лайăхлатма, марксизм-ленинизм теорине пропагандăлас ĕçе витĕмлĕн, коммунизм строительствин конкретлă задачисемпе тачă çыхăнтарса туса пыма пулăшать.

Курссенче вĕренме пропагандистсене суйласа илесси, лекцисемпе семинар занятийĕсене пысăк пахалăхпа ирттересси, вĕренÿ ĕçне тĕрĕс йĕркелесси, малтанхи кунсенчен пуçласах вĕренме лайăх условисем туса парасси—паянхи пысăк задача.

Курссем ирттерес ĕçре иртнĕ çулсенче пулнă çитменлĕхсене кăçал тумалла мар. Сăмахран, КПСС райкомĕсенчен хăшпĕрисем курссенче вĕренме пропагандистсем суйласа илес ĕç çине çиелтен пăхнă, вĕсене кăтартнă вăхăтра вĕренме яман. Партин Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри тата Шăмăршă райкомĕсем курсра вĕренме план тăрăх кăтартса панă пропагандистсенчен çуррине яхăн кăна уйăрнă; КПСС Муркаш райкомĕ вара, план тăрăх çичĕ çын уйăрас вырăнне, пĕр çын кăна уйăрса янă.

Партин нумай райкомĕсемпе хула комитечĕсем курссенче вĕренме çынсем суйласа илес ĕçе турĕç. Анчах вĕсенчен хăшпĕрисем пĕлтĕрхи йăнăшсене те тунă. Курссене пысăкрах программа тăрăх вĕренекен кружоксен руководителĕсене (семинарсен, диалектикăлла тата историлле материализм вĕренмелли кружоксен, политикăлла экономи вĕренмелли кружоксен руководителĕсене) уйăрса ярас вырăнне, пĕчĕкрех программа тăрăх вĕренекен политшкулсемпе кружоксен руководителĕсене вĕрентме палăртнă. Курссенче семинар руководителĕсене, каçхи партшкулсенче ĕçлекен пропагандистсемпе преподавательсене, КПСС историйĕпе экономика ыйтăвĕсем тăрăх ĕçлекен пропагандистсене мĕн чухлĕ уйăрса ямаллине кашни райкомпа хула комитетне пĕлтернĕ. Апла пулин те, партин Калинино, Куславкка, Кувакино, Элĕк, Канаш, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр райкомĕсем каçхи партшкулсенче ĕçлекен преподавательсене пĕрер çын та уйăрман.

Курссенче занятисем пуçланиччен вăхăт нумай юлмарĕ. Вĕренме уйăрса ярас ĕçе çак кунсенчех туса çитерес пулать, вĕсем вĕренме вăхăтра килччĕр.

Парти пропагандистсене ответлă ĕç шанса панă. Çак ответлă ĕç пропагандистсене хăйсен идейăлла-политикăлла пĕлĕвĕсене ÿстерессишĕн тата методика тĕлĕшĕнчи ăсталăхне хăпартассишĕн куллен тимлĕн тăрăшма хушать. Çак ĕçре пропагандистсене кирлĕ пулăшу парасси, вĕсене теори енчен пĕрмай ÿстерсе пырасси—парторганизацисен хисеплĕ тивĕçĕ.

Д. АБАШЕВ,
КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕн заместителĕ.

Парти райкомĕсен пленумĕсенче

СĔНТĔР. КПСС райкомĕн черетлĕ пленумĕ партин членĕн кандидачĕсемпе ĕçлесси çинчен сÿтсе яврĕ.

Районти хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем çамрăк коммунистсемпе, парти членĕн кандидачĕсемпе ĕçлессине лайăхлатнă. Анчах та ку ĕçре çитменлĕхсем нумай-ха.

КПСС райкомĕн бюровĕ тата пуçламăш организацисем çамрăк коммунистсене, уйрăмах парти членĕн кандидачĕсене воспитани парас ĕç çине çителĕксĕр пăхаççĕ. Районта 104 кандидат, вĕсенчен 75-шĕн стаж срокĕ иртнĕ, 33-шĕ кандидатра 7—8 çул тăраççĕ.

Стаж срокĕ иртнĕ кандидатсем уйрăмах МТС-ри, «Большевик», «Гвардия», Чкалов ячĕпе, Ворошилов ячĕпе, Ленин ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан колхозсенчи пуçламăш парторганизацисенче нумай. Çак парторганизацисенче парти членĕн кандидачĕсене воспитани парас, вĕсене парти членне кĕме хатĕрлес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, пухусенче çамрăк коммунистсене воспитани парассипе çыхăнса тăракан ыйтусем сахал сÿтсе яваççĕ, кандидатсене партпорученисем памаççĕ, обществăлла ĕçе хутшăнтармаççĕ.

КПСС райкомĕ парти членĕн кандидачĕсене воспитани парас ĕçре пуçламăш парторганизацисене çителĕксĕр пулăшса пырать. Çамрăк коммунистсемпе кандидатсем валли лекцисем, докладсем туса памаççĕ, вĕсемпе уйрăм калаçусем ирттермеççĕ. Çак ыйтăва районти хаçат та çителĕксĕр çутатать.

А. СОЛОВЬЕВ.

* * *

СОВЕТСКИ. КПСС райкомĕн черетлĕ пленумĕ ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕ районти культурăпа çутĕç учрежденисене мĕнле ертсе пыни çинчен сÿтсе яврĕ.

Районти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем чылайăшĕ партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе хавхаланса хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç.

Районта культурăпа çутĕç учрежденийĕсен хисепĕ çулсеренех ÿссе пырать. Кăçал Тури Ачакра, Этменте тата Васькассинче çĕнĕ библиотекăсем уçма палăртнă. Иртнĕ çул «Дружба» колхоз 200 çын вырнаçмалăх клуб турĕ. Чылай колхозсенче хĕрлĕ кĕтессем уçнă.

Тури Ачакри ялти клуб (заведующийĕ В. Руссаков юлташ) хăйĕн ĕçне яланах планпа туса пырать, клуб совечĕн членĕсемпе тата ялти активпа тачă çыхăнса тăрать. Унта час-часах лекцисем, докладсем, спектакльсем, концертсем, тематикăлла вечерсем пулаççĕ. Клуб çумĕнчи хор кружокĕ паха концертсем ирттерет, хăйĕн концерчĕсене таврари колхозсене те кайса кăтартать.

Парторганизаципе ял Совечĕ клуб ĕçĕпе тăтăшах интересленеççĕ, ăна пулăшса пыраççĕ. Парторганизаци пухăвĕсенче, ял Совечĕн сессийĕсенче клуб ĕçĕ çинчен час-часах сÿтсе яваççĕ.

Килтĕшри, Турайри, Якаткассинчи, Этменти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем те хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç.

Анчах та чылай культурăпа çутĕç учрежденийĕсем ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе йĕркеллĕ ĕçлесе пырайманççĕ-ха. Вĕсенче ĕçлекен кадрсем час-часах улшăнаççĕ.

Районта 33 художествăллă пултарулăх коллективĕ пур. Çав коллективсене ертсе пырас ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Районти художествăллă пултарулăх смотрне ирттерме япăх хатĕрленеççĕ.

Ял Совечĕсем культурăпа çутĕç учрежденисене укçа-тенкĕ вăхăтра парса пырассишĕн тăрăшмаççĕ. Кăçал районти культурăпа çутĕç учрежденийĕсем 5 уйăх хушшинче бюджетри укçан 15 процентчĕре çеç усă курнă.

Ял Совечĕсем укçа вăхăтра уйăрса паман пирки Кивĕ Тикешри вулав çуртчĕ хаçатсемсĕр юлнă.

Ку çитменлĕхсем пурте ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсене кирлĕ пек ертсе пыман, ĕçсынни депутачĕсен ял Совечĕсем ку ĕçпе интересленмен пирки пулнă.

Пленум сÿтсе явнă ыйтупа тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

В. МИХАЙЛОВ,
Киров ячĕпе тăракан колхозри партбюро секретарĕ.

* * *

КУСЛАВККА. Районта комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче ĕçлесси лайăхланнă. Комсомол организацийĕсене ертсе пырас ыйтусене парти райкомĕн бюровĕнче тăтăшах лартаççĕ. Бюро ларăвĕсенче кăçал ку ыйтупа тăватă парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене итленĕ. Комсомолецсен политикăлла вĕренĕвне йĕркелесси çинчен итленĕ хыççăн çак ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшнă.

Чылай парторганизацисем, комсомола парти резервĕ вырăнне хурса, комсомол организацийĕсене куллен ертсе пыраççĕ. «Динамо», «Правда» «Алга» колхозсенчи парторганизацисенче комсомолецсене партин уçă пухăвĕсене чĕнеççĕ, обществăн активлă членĕсем пулма вĕрентеççĕ. Çавăнпа унти комсомолецсемпе çамрăксем колхоз производствине хастарлă хутшăнаççĕ.

Суртсем тăвакан заводри, машина-трактор станцинчи комсомолецсем те производствăра ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. Ку предприятисенчи вуншар комсомолецсене Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

ВЛКСМ организацийĕсене ертсе пырас ĕçре çитменлĕхсем те палăраççĕ. Тĕп çитменлĕх вăл—парти райкомĕ ку тĕлĕшпе йышăннă решенисене пурнăçа кĕртсе çитерейменни.

Киров ячĕпе, Чапаев ячĕпе, Ленин ячĕпе тата Сталин ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисем çамрăксем хушшинче ĕçлессине манăçа хăвараççĕ. Кунти комсомолецсем пухусем ирттермеççĕ.

Парти райкомĕн черетлĕ пленумĕнче комсомола ертсе пырасси çинчен сÿтсе яврĕç. Пленумра нумайăшĕ тухса каларĕç.

Пĕрремĕш вăтам шкул директорĕ И. Нилов юлташ парторганизацин комсомола ертсе пырас ĕçри опычĕпе паллаштарчĕ. Парторганизаци куллен ертсе пынине пула шкулти комсомол тата пионер организацийĕсем тулли пурнăçпа пурăнаççĕ. Шкулти комсомолецсем пурте вĕренÿре ĕлкĕрсе пынă, халĕ экзаменсем ăнăçлă тытаççĕ.

Пленумра ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Н. Николаев юлташ васкавлă сăмах тухса каларĕ. Унăн сăмахĕнчен ВЛКСМ райкомĕ хăйĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн тунине ăнланма пулмарĕ.

Пленум йышăннă решенире комсомол организацийĕсене парти енчен ертсе пырас ĕçе лайăхлатмалли мерăсене палăртнă.

Хаçатсене пăхса тухни

Новаторсен опытне анлăн сарассишĕн

Канашри вагонсем юсакан заводăн коллективĕ кăçал продукци туса кăлармалли государство заданине декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма, планран ирттерсе пĕр миллион тенкĕлĕх продукци пама, ĕç тухăçлăхне иртнĕ çултинчен 4 процент ытларах ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес тата производство процесĕсене рационализацилес тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем тума обязательствăсем илнĕ.

Йышăннă обязательствăсене чыслăн пурнăçа кĕртес тесен, заводра социализмла ăмăртăва кунран-кун вăйлатса пымалла. Производство хăвăртлăхĕсене ÿстерес, продукцин пахалăхне лайăхлатас тата унăн хăйне ларакан хакне йÿнетес, перекетлĕхшĕн кĕрешес тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартакансен опытне анлăн сарни кирлĕ. Анчах заводра тухса тăракан нумай тиражлă «Вагонник» хаçат çапла тумасть, вăл производство ыйтăвĕсемпе çителĕксĕр интересленет, илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешÿре парти организацине администраци кирлĕ таран пулăшса пымасть.

Заводри çĕршер рабочисем производствăра паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, И. Зайнутдинов стахановец иртнĕ çулта 2,7 çулхи нормăна тултарнă. Вăл кăçал 3 çул нормине пурнăçлассишĕн кĕрешет. Запаслă пайсене юсакан цехри 57 стахановец январьте хăйсен заданийĕсене икшер хут ытла ирттерсе пурнăçланă. Сергеевпа Харитонов рессорщиксем май уйăхĕнче кулленхи нормăна 220—230 процент таран тултарса пынă.

Паллах, асăннă юлташсем пек ĕçлекен рабочисем Тăван çĕршыв ырлăхĕпе тĕрекĕшĕн хăйсен мĕнпур вăй-халĕпе ăсталăхне паракан, производство техникине лайăх пĕлекен, ĕçре çĕнĕ меслетсемпе туллин усă куракан новаторсем пулса тăраççĕ. Вĕсем ĕç тухăçлăхне вĕçĕмсĕр ÿстерсе пыма, кивелнĕ нормăсене хăюллăн çĕмĕрме, çапла вара çĕнĕ, производствăна татах та хăватлăн аталантарма пулăшакан нормăсем çине куçма кашни предприятирех пур майсем те пуррине уççăн кăтартса параççĕ.

Мĕнле çутатать-ха «Вагонник» хаçат новаторсен опытне? Хаçатăн пилĕк уйăх хушшинче тухнă номерĕсене тĕплĕн тишкерсе тухсан, çакă курăнать: производствăра малта пыракансен опытне пĕтĕçтерес тата сарас ĕçе хаçат пачах çителĕксĕр туса тăрать, стахановецсем мĕнле майпа чаплă çитĕнÿсем тунине кăтартса памасть. Сăмахран, механически цехри малта пыракансем çинчен хаçат мартăн 20-мĕшĕнче çапла çырать:

«Неонилин электросварщик, Г. Кочемасова сверловщица, В. Васильев токарь кулленех 2—2,5 смена нормине тултараççĕ. Хăйĕн социализмла обязательствисене Федорова сверловщица ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Вăл та ĕç нормине 2—3 хут ирттерсе тултарать».

Стахановецсем çинчен хаçатăн чылай номерĕсенче çакăн евĕрлĕ кăна çырнă, вĕсен ĕçне тĕплĕн çутатни çук.

Производствăра малта пыракансен хушамачĕсене тата нормăна мĕн чухлĕ тултарнине пĕлтерекен цифрăсене кăна илсе кăтартни новаторсен опытне сарни мар, фактсене кăна çырса пыни пулать. Çавăнпа та ун пек заметкăсем вулакансене тивĕçтерме пултараймаççĕ.

Хаçатра новаторсен опытне лайăх пĕтĕçтерекен, вĕсен ĕç меслечĕсене тĕплĕн уçса кăтартакан статьясем, очерксем тăтăшах пичетлемелле. Малта пыракансен опытне анлăн сарас тĕлĕшпе хаçатра «Стахановец трибуни» организацилемелле, новаторсен заочнăй канашлăвĕсене ирттермелле. Новаторсем хăйсен ĕçне мĕнле организациленĕ? Вĕсем хăйсене панă заданисене мĕнле майпа темиçешер хут ирттерсе тултараççĕ, лайăх продукци туса кăлараççĕ тата пиншер тенкĕ перекетлесе хăвараççĕ? Çак ыйтусене тĕплĕн çутатни кирлĕ те ĕнтĕ новаторсен опытне пропагандăлас ĕçре.

Заводри рационализаторсемпе изобретательсен йышĕ те кунран кун ÿссе пырать. Кăçал 600 пин тенкĕ перекетлесе хăварма май паракан 300 рационализаторла сĕнÿ пухма палăртнă. Çак шутран пĕрремĕш кварталта 75 сĕнÿ пухмалла пулнă. Анчах «Вагонник» çав сĕнÿсене пухас тата вĕсене пурнăçа кĕртес ĕç мĕнле пулса пынине çителĕксĕр çутатать. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта тăратнă 55 сĕнÿрен 39 сĕнĕве кăна пурнăçа кĕртнĕ.

Апла пулин те хаçат заводри тата çĕршыври ытти предприятисенчи новаторсен паха сĕнĕвĕсене кунти производствăра анлăн сарса пыма чăрмантаракансемпе кĕрешмест. Пĕлтĕрхи декабрĕн 31-мĕшĕнче тухнă номерте хаçат Ф. Ковалев инженерăн меслетне ĕçе кĕртесси заводра çителĕксĕр пулса пынине палăртнăччĕ. Унтанпа 5 уйăх иртрĕ ĕнтĕ, хаçат асăннă инженерăн меслетне сарас ĕç мĕнле пынине кăтартакан пĕр статья та пичетлемерĕ. Средневолжски станоксем тăвакан заводри паллă токарĕн Василий Колесовăн меслетне сарасси мĕнле пынипе те хаçат пачах интересленмест.

Хаçатăн рабочисене рационализаторсен паха сĕнĕвĕсемпе тăтăшах паллаштармалла, çав сĕнÿсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмелле. Ку тĕлĕшпе «Рационализатор трибуни» тусан вырăнлă пулать.

Малта пыракансен опытне анлăн çутатас тесен, хаçатăн хăйĕн корреспонденчĕсемпе куллен ĕçлемелле. Заводри кашни стахановец, кашни новатор активлă корреспондент пулса тăтăр.

Цехсенчи партипе профсоюз тата комсомол организацийĕсем малта пыракансен опытне сарас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине кăтартакан статьясем тăтăшах пичетлемелле.

Заводри хăшпĕр цехсем производство заданийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Хаçатăн ĕçри çитменлĕхсене хăюллăн критиклемелле, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса памалла, производствăна пĕр тикĕс ĕçлеттермелле тăвассишĕн, штурмовщинăна пĕтерессишĕн кĕрешмелле.

Производствăра малта пыракансен опытне пропагандăласси—«Вагонник» хаçатăн хисеплĕ тивĕçĕ. Рабочисен, инженерсемпе техниксен творчествăлла активлăхĕпе пуçарулăхне ÿстерес тĕлĕшпе парти организацине хаçатăн куллен пулăшмалла. Уйрăмах производство процесĕсене механизацилес, автоматизацилес, электрификацилес тата химизацилес ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунă новаторсен опытне анлăн пропагандăламалла.

Заводри парти бюровĕ хăйĕн хаçачĕ производствăра малта пыракансен опытне мĕнле çутатнипе куллен интересленме тивĕç.

Совет çамрăкĕсем—телейлĕ çамрăксем

Архив материалĕсем тăрăх

Социализмла çĕршыври çамрăксем пек телейлĕ те савăнăçлă çамрăксем урăх çук. Ĕлĕк, Октябрьти Аслă революциччен, çамрăксене савăнса ÿсме, вĕренме май пулман. Мĕншĕн тесен ĕлĕк çĕршывра капиталистсемпе помещиксем хуçаланнă. Вĕсем çамрăксене тарçăра тытса усранă. Тарçăна хĕнеме те пултарнă. Улатăрти пĕр помещица хăйĕн тарçисенчен пĕрне—18 çулхи хĕре Анастасия Самойловăна пĕрмаях пуçран хĕнесе пурăннă. 1842 çулта пĕррехинче помещица Самойловăна кĕпе çума хушнă пулнă, пуç ыратнипе вăл çăвайман. Çавăншăн помещица Самойловăна хĕненĕ-хĕненĕ те кайран тула кăларса пăрахнă. Çакăн пек хĕненĕ хыççăн Самойлова вилнĕ (Чăвашсен тĕп архивĕнчи документран).

Çавăн пек пулнă ĕлĕкхи пурнăç. Çапла пулнă ĕлĕкхи çамрăксен «прависем».

Патша влаçĕ «тĕттĕм, вĕренмен халăха тыткалама çăмăл», тесе шутланă. Çавăнпа та Октябрьти революциччен чăвашсем хушшинче шкулсем тума тăрăшман. Хут пĕлекенсем пит сахал пулнă. 1881 çулта Шупашкар уезчĕн земски управи, уездра хут пĕлекенсене шута илнĕ хыççăн, 95 пин çын хушшинче аллă пуслă пĕлекенсене 476 çын тупнă. Ку ĕнтĕ уездра хут пĕлекенсен хисепĕ 0,5 процент кăна пулнине кăтартать. Ун чухне уездра 259 ял пулнă. Çак 259 ялтан 31 ялĕнче хут пĕлекен пĕр çын та пулман. Уездра вуншар пин ача, шкулсем çуккине пула, хут вĕренеймесĕр тăрса юлнă.

Паллах, хут пĕлмен çамрăксен пурнăçĕ телейлĕ пулман, вăл телейсĕрлĕх чăвашсен ĕлĕк ĕмĕртен-ĕмĕре тăсăлса пынă асапăхĕне çыхăнса тăнă. Акă, Етĕрне уезчĕнче 1905 çулта 21.938 ачаран шкулсенче пĕтĕмпе те 4.899 ача çеç вĕреннĕ. Ку ĕнтĕ 9 ачаран 2 ача кăна шкулта вĕреннине, 7 ача вĕренеймесĕр юлнине пĕлтерет, 21.938 ачаран 17.039 ача шкул тулашне тăрса юлнине кăтартать. Шупашкарпа Етĕрне уезчĕсенче çеç мар, ытти вырăнсенче те ачасене вĕренме шкулсем çитмен. Шкулсем тума патша влаçĕ укçа-тенкĕ паман пирки, шкулсем кулаксенчен тара илнĕ юрăхсăр пÿртсенче, чиркÿ хурал пÿрчĕсенче е чавсанайсенче çеç ĕçлекеленĕ.

1910 çулхи мартăн 17-мĕшĕнче Етĕрне уездĕнчи земски управăна Чатукассинчи (халĕ Красноармейски районĕ) учительница Филиппова çапла çырнă:

«Хваттер хуçи шкул хваттерне юри таса мар усрать. Хваттер хуçи арăмĕ учительница çук чухне класра сÿс шăрттласа тусан кăларать, хăйсем сторож пулса тăраççĕ пулин те, тусанне темиçе кун хушшинче те пĕр хутчен те тасатмаççĕ. Класпа юнашар чăланта кунĕн-çĕрĕн сурăх пÿтеккисем усраççĕ. Çавăнпа класа усал, таса мар шăршă тухса тулни тата пÿтексем макăрни ачасене вĕренме чăрмантарать».

Хальхи пек çутă, ăшă, таса шкул çурчĕсем çинчен ун чухне шухăшлама та май килмен. Ĕçсыннисем шкул уçасси тата ытти çинчен çырнă жалобăсене уездри управăсенче пăхса тухса пулăшу паман. Çамрăксен савăнса вĕренме условисем пулман. Ахаль те асаплăх тÿссе пурăнакан ĕçсыннисен ачисен шкулта та савăнăç пулман. Вăл Етĕрне уездĕнчи Виçпакасси (халĕ Çĕрпÿ районĕ) шкулĕнчи учитель çырнă жалобăран лайăх курăнать. Акă вăл мĕн çырнă:

«Эпĕ çак шкулта икĕ çул ĕçленĕ хушăра шкул ачисем нарвитти чирĕпе аптранисем палăрчĕç. Вăл таса мар шывпа усă курниччен килет мĕн. Мĕншĕн тесен шкул ачисем валли юнашарти лачакаран шыв ăсма тивет... ялта урăх çăл шывĕ е кулата шывĕ çук... Шкул çумĕнчи чиркÿ картинче таса шыв кулати пур, вăл кулатана управа тасатса тăрать, анчах пуп çав кулатаран шкул ачисем валли шыв ăсма чарать. Çавăнпа шыв çитмен чухне ачасем кÿршĕри лачакана кайса ĕçеççĕ, вара вĕсем вар чирĕпе чирлеççĕ...»

Çавăн пек йывăр условисенче, тасамарлăхра «вĕрентнĕ» ĕлĕкхи шкулсенче. Çитменнине тата патша влаçĕн ирĕкĕпе учительсем шкулта вĕренекен çамрăксене хĕнеме те пултарнă. Акă, Çĕрпÿ уездĕнчи Рынкă Сали (халĕ Çĕрпÿ районĕ) чиркÿ приходĕнчи шкул учителĕн помощникĕ вĕренекен ачасене пуçран линейкăпа çапса «вĕрентсе» пурăннă. Шкул ачисем çак тискер çын вĕрентме пĕлменнине кура тата ачасене çамкисем кăвакарса е шыçса кайиччен линейкăпа çапса хĕненине тÿсеймесĕр, 1906 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнче аслă переменăра сумккисене илсе шкултан тухса кайнă. («Волжский вестник», 1906 çул).

1913 çулта хальхи Чăваш республикинче пуçламăш шкулсем 426 пулнă. вĕсенче 27.148 ача вĕреннĕ, двухклассăнăй шкулсем 27 пулнă, вĕсенче 1.169 ача вĕреннĕ, вăтам шкулсем 10 пулнă, вĕсенче 1.329 çын вĕреннĕ. Пĕтĕмпе 463 шкулта 29.649 çын кăна вĕреннĕ, ытти 90 пин çамрăк шкул тулашĕнче тăрса юлнă. Вăтам шкулсем çитмен пирки тата аслă шкулсем пулманран, 20 пин ытла çамрăк пуçламăш шкулсенчен малалла вĕренме каяймасăр юлнă. Вăл вăхăтра, вăтам шутпа илсен, тăватă яла пĕр шкул тивнĕ, çавăнпа ачасен шкула кашни кун темиçе çухрăм утмалла пулнă.

Чăваш халăхне хăйĕн нумай таланчĕсене кăтартма патша влаçĕ ирĕк паман. Патша влаçĕнчен юлнă шкулсен хисепĕ чăваш халăхĕ валли çителĕклĕ пулман.

Октябрьти социализмла аслă революци çеç пур халăхсемпе пĕрле чăваш халăхне те хăйĕн культурине çĕклеме май пачĕ, хăйĕн пултаруллă таланчĕсене пурнăçра кăтартма çул уçрĕ. Патша Российинче халăхăн 73 проценчĕ вулама-çырма пĕлмен пулсан, вырăс мар халăхсем хушшинче вара хут пĕлменнисем тата ытларах пулнă пулсан, Совет влаçĕ шкулсен хисепне çултан-çул ÿстерсе, хут пĕлменлĕхе чакарса пычĕ.

Чăваш облаçне туса хунă хыççăн, 1921 çулти сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, 585 шкул пулнă, вĕсенче 40 пин ача вĕреннĕ. 1925 çулта 814 шкул пулнă, вĕсенче 57.435 ача вĕреннĕ. Çапла, шкулсемпе вĕренекен çамрăксен хисепĕ кашни çул ÿссе пычĕ. 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне Чăваш республикинче пуçламăш шкулсем 500, çичĕ çул вĕренмелли шкулсем 439, вăтам шкулсем 107,—пĕтĕмпе 1.046 шкул шутланать. Çак шкулсенче вĕренекен çамрăксен хисепĕ 172.611 çын. 1913 çулта вăтамран 426 шкулта кашнинче 69 ача вĕреннĕ пулсан, халĕ 1.046 шкулта кашнинче 165 ача вĕренет.

Халăха çутта кăларас ĕçе Чăваш АССР бюджетĕнчен уйăрса паракан укçа-тенкĕ хисепĕ те çултан-çул ÿссе пырать. 1948 çулта ку ĕçе 98 миллион ытла расходланă пулсан, кăçалхи 1953 çулта халăха çутта кăларас ĕçе унтан та ытларах укçа каять. Кашни вĕренекен ача пуçне 1948 çулта 537 тенкĕ расходланă.

1913 çулта халăха вĕрентес ĕçе расходланă укçа-тенкĕ хисепĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, кашни çын пуçне 66-шар пус пулнă пулсан, 1930 çулта вăл укçа хисепĕ 12 тенкĕ, 1940 çулта 67 тенкĕ, 1948 çулта 98 тенкĕ пулнă, 1953 çулта 166 тенке çитмелле. 1913 çултипе танлаштарсан, вĕренекен çамрăксен хисепĕ 6 хута яхăн ÿснĕ. 1913 çулта 4 ачаран 3 ача шкул тулашне тăрса юлнă пулсан, халĕ пур ачасем те шкулта вĕренеççĕ.

Партин XVI-мĕш съезчĕ йышăннă тăрăх, 1930—1931 вĕренÿ çулĕнчен пуçласа пур çĕрте те, вăл шутра Чăваш республикинче те, обязательнăй йĕркепе кашни çамрăкăн ялсенче çичĕ çул, хуласенче 10 çул вĕренмелле. Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă тăрăх, 1955 çултан пуçласа пĕтĕм хуласемпе ялсенче кашни çамрăкăн вăтам шкултан вĕренсе тухмалла. Çакă ĕнтĕ çамрăксене çутă та телейлĕ пурнăç тăвас ĕçе хутшăнтармалли пысăк май пулса тăрать.

Пуçламăш шкулсемпе вăтам шкулсемсĕр пуçне, пирĕн республикăра виçĕ аслă шкул пур, вĕсенче пин ытла çамрăк вĕренет, 23 специальнăй вăтам шкулта вăтам квалификациллĕ кадрсем хатĕрлеççĕ. Унсăр пуçне, виçĕ педучилище пур, унтан кашни çулах пĕрер пин çамрăк учитель вĕренсе тухать.

Чăваш республикинчи çамрăк ачасемпе хĕрсем 2 пин çын ытла урăх хуласенче вĕренеççĕ. 1930—1952 çулсем хушшинче пирĕн республикăри техникумсемпе педучилищĕсем пуçламăш шкулсем валли 8.671 учитель вĕрентсе кăларнă, чăвашсен педагогика институтĕнчен учительсем икĕ пин çын вĕрентсе кăларнă. Халĕ республикăра ĕçлекен 8 пин ытла учительтен нумайăшĕ Совет влаçĕ вăхăтĕнче вырăнти аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă.

Патша вăхăтĕнче халăх учителĕ суйлав правипе те усă курман, вăл пупран хăраса, ăна пăхăнса пурăннă. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви учительсене калама çук çÿлĕ вырăна çĕклерĕç. Халĕ пирĕн Чăваш республикинче РСФСР, Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕсем 196 çын, орденсемпе наградăланисем 621, «Ĕçри хастарлăхшăн», «Ĕçре палăрнăшăн» медальсемпе наградăланисем 1.467 çын. Вĕсем совет çамрăкĕсене коммунизмла воспитани парассишĕн пархатарлă ĕç тăваççĕ.

Кусемсĕр пуçне яслисем, ача сачĕсем республикăра 81 шутланаççĕ, вĕсенче халĕ тăватă пин ытла ачана пăхса ÿстереççĕ.

Совет çамрăкĕсем çирĕп сывлăхлă тата тĕреклĕ ÿсчĕр тесе, партипе правительство ача яслисемпе çурчĕсене, ачасен санаторийĕсемпе канмалли лагерĕсене, садсемпе площадкăсене çителĕклĕ тăвассишĕн тăрăшаççĕ. Çаксем ĕлĕкхи çаманара пĕри те пулман, пулма та пултарайман. Октябрьти Социализмла Аслă революци хыççăн çеç, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви яланах тăрăшнипе, пирĕн çĕршыври çамрăксем савăнăçлă пурнăçпа пурăнаççĕ.

Халĕ пирĕн çамрăксем хушшинче инженерсем, агрономсем, летчиксем, шоферсем, учительсем, врачсем, электротехниксемпе монтерсем тата ытти специалистсем нумай, хут пĕлмен çамрăк çук. Пирĕн çĕршывра çамрăксем валли шкулсен алăкĕсем уçă. Вĕренекенсем валли таса, çутă суртсем, лабораторисем, библиотекăсем, общежитисем тунă, татах та тăваççĕ. Çамрăксен культурăллă канăвне организацилес тĕлĕшпе клубсемпе культура çурчĕсем, вулав çурчĕсем, хĕрлĕ кĕтессем паллă вырăн йышăнаççĕ. Патша Российинче пĕтĕм сурт-йĕрсем уйрăм хуçасен харпăрлăхĕ пулса тăнă пулсан, халĕ, Совет влаçĕ пулнăранпа, мĕнпур клубсем, залсем, театрсем, кинотеатрсем, вулав çурчĕсем, бульварсемпе садсем, библиотекăсем, музейсем, стадионсем, галлерейăсем, хаçат-журналсемпе кĕнекесем пĕтĕм халăх харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ.

Ĕлĕкхи саманара çамрăксем государство ĕçне хутшăнасси çинчен сăмах пулма пултарайман. Çамрăксене салтака кайса килмесĕр халăх çине тухма юраман, 12 çула çитмесĕр çĕр те паман, ĕçлеттерессе ваттисемпе тан ĕçлеттернĕ, ĕç укçине катăк тÿленĕ. Совет влаçĕ çамрăксене государствăна тытса пырас ĕçе хутшăнма, влаçăн пур органĕсене те суйлама та суйланма та право пачĕ.

Пирĕн çĕршывра çамрăксем общество интересĕсене хăйсен интересĕсенчен çÿле хурса хаклаççĕ, мĕншĕн тесен — вĕсем Тăван çĕршыва чунтан-чĕререн парăннă совет патриочĕсем. Хальхи çамрăксем—телейлĕ çамрăксем.

П. ЕРМОЛАЕВ.

Паха çул-йĕршĕн!

ÇУЛ-ЙĔР СТРОИТЕЛЬСТВИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА
(Июнĕн 10-мĕшĕ тĕлне, процентпа)

РАЙОНСЕМ	Материалсем турттарнă	Çĕр купаланă	Чул сарнă	Кĕпер тунă
1. Шупашкар	75	71	15	3
2. Первомайски	66	43	—	12
3. Сĕнтĕрвăрри	56	57	—	16
4. Красноармейски	55	24	—	—
5. Улатăр	41	42	7	12
6. Элĕк	38	49	32	23
7. Октябрьски	36	1	3	12
8. Çĕрпӳ	35	29	—	13
9. Шăхасан	34	35	—	18
10. Чурачăк	30	20	—	—
11. Канаш	25	9	—	71
12. Советски	25	21	2	—
13. Тăвай	23	60	17	13
14. Елчĕк	23	60	—	30
15. Ишлей	22	12	7	30
16. Чкаловски	21	60	40	40
17. Çĕмĕрле	21	41	—	48
18. Пăрачкав	20	—	—	10
19. Вăрмар	19	12	5	24
20. Вăрнар	14	80	—	48
21. Комсомольски	14	35	50	—
22. Сĕнтĕр	14	12	2	23
23. Етĕрне	12	3	—	18
24. Куславкка	11	9	8	13
25. Муркаш	11	38	7	24
26. Кувакино	11	22	—	11
27. Йĕпреç	11	—	—	8
28. Шăмăршă	10	3	—	17
29. Хĕрлĕ Чутай	7	5	—	—
30. Калинино	5	29	—	4

Малтисемпе танлашмалла

ЧУРАЧĂК. Районти чылай колхозсем çул-йĕр ĕçĕнче хăшпĕр çитĕнӳсем турĕç. «Красное Сормово», «Память Сталина», Калинин ячĕпе тăракан колхозсем çул-йĕр ĕçне 6—7 кун хушшинче вĕçлерĕç. Çак вăхăтра асăннă колхозсем çĕршер кубометр çĕр чавса купаланă, вуншар кубометр чул кăларнă тата ытти ĕçсене те тунă.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, районта çул-йĕр ĕçĕ япăх пырать. 40 колхозран 20 колхоз кăна çул-йĕр тăвас ĕçе хутшăннă.

Çул-йĕр ĕçĕнче кашни кун 242 çын çуран, 608 лав, 6 автомашина ĕçлемелле. Кун чухлĕн ĕçлени çук-ха.

Суту-илӳ организацийĕсем çул çинче ĕçлекенсем патне таварсем илсе тухассине йĕркелемен. Колхозниксем пирус, шăрпăк, сахăр тата ытти япаласем илме Чурачăка каяççĕ.

Райсовет исполкомĕпе çул-йĕр пайĕ колхозсенчи туртăм вăйне кирлĕ чухлĕ мобилизацилес тĕлĕшпе сахăл ĕçлеççĕ. Уйрăммăнах çул-йĕр ĕçĕпе Чуракасси, Малти Ăнтавăш, Пĕрремĕш Вăрманкасси, Йĕкĕрвар ял Советĕнчи колхозсем начар ĕçлеççĕ. Çул çинче ĕçлеме çак ял Совечĕсенче халĕ те çул-йĕр бригадисем организацилемен.

Çул-йĕр строительствинче ĕçлекен колхозниксем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе йĕркелемен: калаçусем, докладсем иртермеççĕ, хаçат-журнал тупса вулама çук. Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăлармаççĕ.

С. КУЗЬМИН.

Организациллĕ ĕçсем çук пирки

Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ С. Пименов юлташ Куславккан районти çул-йĕр пайне пычĕ.

— Пĕлетĕр-и, Николай Антонович, — терĕ вăл çул-йĕр пайĕн заведующине, — çул çине каякан колхозниксене пама повесткăсем кирлĕ...

Фадеев юлташ шкапран хĕрлĕ повесткăсен купине илчĕ, 7—8 повестка çине мăнаçлăн алă пусрĕ те колхоз председательне тыттарчĕ.

— Ĕçсем мĕнле пыраççĕ, каласа кăтартăр-ха?—ыйтрĕ вăл Пименовран.

Колхоз руководителĕ каласа панинчен çакă курăнчĕ: правлени кăçал та çул-йĕр бригади организацилемен, чул сарас ĕçе тара тытса тутарать. Çул çине кайма кама килчĕ ăна хушать, анчах çыннисем повестка илмен тесе ĕçе тухмаççĕ. Пĕлтĕр çул-йĕр бригадирĕ пулнă П. Трифонов хăйĕн пӳртне юсать...

Çул-йĕр строительствине тытăнас ĕçри çакăн пек организацилле çитменлĕхсем пĕтĕм районта палăраççĕ. Кашни колхозра яланлăх çул-йĕр бригади пулмалла, унăн бригадирне райсовет исполкомĕнче çирĕплетмелле. Куславкка районĕнчи чылай колхозсенче çул-йĕр бригадисем саланса кайнă, вĕсен членĕсем артельти урăх ĕçсене тăваççĕ. Районти çул-йĕр пайĕ кăçал бригадăсене çирĕплетесси çине çаврăнса та пăхман. Миçе колхозра бригадăсем пур, ăçта çук,—çакă вара Фадеев юлташăн паллă мар.

Бригадăсем çукки çул-йĕр строительствине йĕркеллĕ тытăнма чарса тăрать. Июнĕн малтанхи эрнинче районти 25 колхозран вуннăшĕ кăна çул-йĕр ĕçне хутшăннă. Вăтам шутпа кашни кун 65 çын çуран, 40 çын лашапа ĕçленĕ. Çакă вăл графикпа палăртнă хисепĕн чĕрĕкĕ те пулмасть! Строительство материалĕсем турттарнă çĕрте предприятисемпе колхозсен 13 автомашини ĕçлемелле пулсан, халиччен пĕр-икĕ машина çеç ĕçе тухкаланă.

— Пур колхозсене те ĕçе тытăнтарас тĕлĕшпе мĕн тунă?—ыйтрăмăр эпир Фадеев юлташран.

— Пин хут та каланă пулĕ, хутсем те çырнă, канашлу та ирттернĕ...

Çак ыйтупа пухнă районти канашлура кăçалхи çул-йĕр строительстви планне июлĕн 1-мĕшĕччен тултарма обязательство илнĕ. Анчах илнĕ обязательствăпа тăвайсен чĕнĕвне пур çĕрте те сӳтсе явни, социализмла ăмăртăва кирлĕ пек организацилени çук-ха. «Красная Волга», «Путь Ленина», Киров ячĕпе тăракан колхозсем çул-йĕр строительстви планне иртнĕ çулсенче те тултарса пыман. Çак ĕçрен кăçал та пăрăнса юлма хăтланса, асăннă колхозсен руководителĕсем тĕрлĕ сăлтавсем шыраççĕ.

— Çĕрулми лартса пĕтермен-ха, — тыттарать «Путь Ленина» колхоз председателĕ Г. Мартынов юлташ,—çав ĕçе пĕтерсенех колхозниксене çул çине кăларатпăр...

Калас пулать, райсовет исполкомĕ кирлĕ ĕçе хакламан çавăн пек руководительсемпе килĕшсе тăрать, хăйĕн ларăвне чĕнсе вĕсен отчечĕсене итлемест.

Çул-йĕр работникĕсемпе бригадирсем çул çине тухнă колхозниксен ĕçне начар организациленĕ. Малтанхи эрне хушшинче тунă ĕçсем асăнмалăх та çук. Строительство материалĕсем 4 процент çеç хатĕрлесе турттарнă. Материалсем çук пирки çул çине чул сарас ĕç чарăнса тăрать. Тăпра ĕçĕсене туни планăн 10 процентне те лараймасть. Малашне те кун пек хăвăртлăхсемпе ĕçлесен, куславккасене çул-йĕр строительствин планне тултарма сахалтан та икĕ уйăх кирлĕ.

— Вăхăтрах тултаратпăр,—тет Фадеев юлташ мăнкăмăллăн. — Пĕр çул мар ĕçленĕ...

Халăх вăйĕпе пултарулăхĕ çине шанни лайăх ĕнтĕ. Анчах ĕç хăй тĕллĕнех пулассине кĕтсе ларни сиенлĕ. Плана ăнăçлă тултарма, малтанхи кунсенчи çитменлĕхсене пĕтерсе, организациллĕ ĕçсене вăйлатни кирлĕ.

Т. ИВАНОВ,
(Хамăр корр.).

Юрă праçникне хатĕрленеççĕ

ЧКАЛОВСКИ. Районти ĕççыннисем юрă праçникне пысăк тимлĕхпе хатĕрленеççĕ. Район центрĕнче, «Гвардеец», Киров ячĕпе тăракан, «Пламя Октября» тата ытти колхозсенче те хор кружокĕсем йĕркеленĕ. Рабочисемпе служащисем тата колхозниксемпе колхозницăсем хорсене активлăн хутшăнаççĕ.

Хальхи вăхăтра хор коллективĕсем репертуарта палăртнă юрăсене вĕренеççĕ.

В. КУЗНЕЦОВ.

Библиотека техникумĕнче

Çĕрпӳри библиотека техникумĕ çулсерен вуншар библиотека работникĕ вĕрентсе кăларать. Кунтан вĕренсе тухнисем республикăри хуласенчи, ялсенчи библиотекăсенче, вулав çурчĕсенче, колхоз клубĕсенче ĕçлеççĕ. Сăмахран, Валентина Зуевăпа Зоя Логинова Елчĕкри районти библиотекăра, Инна Михайловăпа Аркадий Владимиров — Кӳкеçре, Анна Пугачева, Вера Мочалова тата Нина Юхтанова—Çĕрпӳре, Николай Ильин — Шупашкарти Максим Горький ячĕпе тăракан библиотекăра ĕçлеççĕ. Вĕренсе тухакансем яланах хăйсем хушшинче тата техникумри преподавательсемпе çирĕп çыхăну тытаççĕ.

Кăçал техникумран 50 çын вĕренсе тухать. Вĕсем Шупашкарти, Етĕрнери, Çĕмĕрлери, Канашри, Çĕрпӳри тата ытти районсенчи библиотекăсенче практикăра пулчĕç, халĕ экзаменсем параççĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Пулас спортсменсем

Стадиона пĕр пек тумланнă ачасен ушкăнĕ чупса тухрĕ. Вĕсен ӳт-пĕвĕ хĕвел суттинче йĕс тĕслĕ курăнать. Шурă тум тăхăннă тренер команда пачĕ. Ачасем хăвăрт саланса йĕркеленсе тăчĕç. Музыка илемлĕ кĕвĕ калать, ачасем тĕрлĕ упражненисем, пирамидăсем тума тытăнаççĕ. Курма пынă халăх вĕсене алă çупса саламлать.

Вĕсем—Шупашкарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче вĕренекенсем. Шкулта вĕренекенсем хулари ĕççыннисене хăйсен ăсталăхне пĕрре çеç мар кăтартнă.

Ачасен спорт шкулĕ 1944 çултанпа ĕçлет. Ăна вăрçă пынă вăхăтри йывăрлăхсене пăхмасăр уçнă.

Малтанах шкулта 16 ача кăна вĕреннĕ. Преподавательсем те çителĕклĕ пулман. Тăхăр çул хушшинче шкул пысăкланнă, ачасене çирĕп сывлăх парса çитĕнтерес ĕçре чылай çитĕнӳсем тунă. Кăçал шкулта тăхăр секци ĕçлет, вĕсенче 287 ача вĕренет. Вăл шутра уйрăмах гимнастика, акробатика, çăмăл атлетика тата йĕлтĕрçĕсен секцийĕсем лайăх ĕçлеççĕ.

Шкулта çамрăксем сывлăха çирĕплетессĕ çеç мар, суйласа илнĕ пĕр-пĕр спорт енĕпе мастерсем пулма тăрăшаççĕ. Шкултан вĕренсе тухнă çамрăксенчен чылайăшĕ республикăри паллă спортсменсем пулса тăнă.

Ачасене спорт енĕпе аталантарас тĕлĕшпе опытлă преподавательсем ĕçлеççĕ. Çăмăл атлетика секцине СССР спорт мастерĕ М. Гущина юлташ, боксерсен секцине—Ленинградри Лесгафт ячĕпе тăракан физкультура институтĕнчен вĕренсе тухнă А. Лавров юлташ ертсе пыраççĕ. Н. Чумаков, М. Степанова, Л. Николаева тренерсем те чылай вăхăт хушши ĕçлеççĕ.

Çакăн пек шкулсем республикăра тата иккĕ—Канашпа Улатăрта ĕçлеççĕ. Вĕсенче те ачасене физически воспитани парас ĕç ăнăçлă пулса пырать. Çĕршыв çамрăксемшĕн тăван амăшĕ пек тăрăшать.

А. ИВАНОВ.

Вăрлăх участокĕсенчи тырпула лайăх пăхса ӳстерер

Çураки ĕçĕсем вĕçленчĕç. Акнă тырăсемпе курăксем тухăçлă пулччăр тесе, халĕ ĕнтĕ калчасене пăхса ӳстерес ĕçе вăхăтра туса пымалла. Çак ответлă ĕçе уйрăммăнах вăрлăх участокĕсем çинче тĕплĕрех туса пыни кирлĕ.

Чи малтанах вăрлăх участокĕсене хакламасăр тăнине пĕтермелле. Сортлă çĕнĕ вăрлăх илсе акнă е хуçалăхра ӳстернĕ сортлă паха тырра вăрлăхлăх акнă вырăнсене çураки вăхăтĕнчех ытти тырпултан, пушă касăсем хăварса, паллă туса хăварман пулсан, çав чикĕсене халĕ тăвас пулать. Вăрлăх участокĕсем ытти тырпултан лайăх палăрса тăччăр, тырпула пухса кĕртнĕ чухне вăл участоксем пирки нимĕнле тавлашусемпе иккĕленӳсем те ан пулччăр. Çакă вăл вăрлăхлăх акнă тырăсен агротехникине пурнăçланине те тĕрĕслесе тăма май парать. Чикĕсене окучникпе сухаласа 30—45 сантиметр сарлакăш тумалла.

Нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăх участокĕсене суйласа илсе палăртас ĕçе уйрăммăнах тимлĕн тумалла. Çав участоксем иккĕмĕш çул ӳсекен клеверпа тимофеевка уйĕсенче, люцерна пĕрремĕш çул ӳсекен уйсенче, курăк лайăх ӳсекен вырăнсенче пулмалла. Иккĕмĕш çул ӳсекен клеверпа тимофеевка вăрă нумайрах параççĕ. Çав курăксем вырăнти условисене хăнăхса ӳснине, вĕсен вăррисем йăх тĕпĕшĕнчен çирĕпрех пулнине кăçал кашни колхозрах шута илес пулать. Иккĕмĕш çул ӳсекен клевер, пусăра пĕрремĕш çул ӳсекен клевертан сайрарах курăнать пулсан та, вăрлăх тума ăна хăвармалла. Пĕрремĕш çул ӳсекен курăксем утă тума лайăх.

Вăрлăхлăх хăварма пăхнă уйсенче курăксем сайраланнă вырăнсем нумай пулсан, çара вырăнсене çумкурăксем пусса илнĕ пулсан, унти курăксене вăрлăхлăх хăварма кирлĕ мар, вĕсене çулса утă тумалла. Курăксен вăрлăх участокĕсем валли çумкурăксенчен таса вырăнсене суйласа илмелле.

Вăрлăх участокĕсем çинчи пур ĕçсене те кая хăвармасăр, тĕплĕ туса пыма бригадăсенчен колхозниксем уйăрса памалла. Çав колхозниксене кашни уйрăм культурăн вăрлăх участокĕнче ĕçлеме çирĕплетмелле.

Ялхуçалăх культурисене ăнăçлă аталанма, тухăçлă пулма çанталăк лайăх пулни кăна çитмест. Тухăçлă ӳсе пулма вĕсене тăпрара нӳрĕ тата апатсем яланах çителĕклĕ пулни, тăпра тăтăшах кăпăш тăни кирлĕ. Тĕштырăсемпе пучахлă курăксем хăйсен çимĕç органне — чечек пуххине (пучах, шерепе, султан тата ытти те) туна кăларнă вăхăтра тытăнтараççĕ, пĕрчĕсем йышлă пулас никĕсе — пучахри чечексене (пĕчĕк пучахсене) тунаран пуç кăларнă вăхăтра хываççĕ. Нумай пĕрчĕллĕ, пысăк пучахлă тырпул туса илме вăрлăх участокĕсенчи калчасене асăннă вăхăтсенче уйрăммăнах тутлăхлă япаласем çителĕклĕ пулни кирлĕ. Пучахсем шутра, пысăк пулччăр тесен, калчасене туна кăларнă вăхăтра азотлă тата фосфорлă удобренисем, пучах кăларнă вăхăтра — фосфорлă тата калиллĕ удобренисем сапса памалла. Тĕслĕхрен, «Торсдаг» сортлă пăрçа тухăçлăхĕ унăн туни вăрăмрах пулнинчен килет. Пăрçа туни мĕн чухлĕ вăрăмрах пулать, хутаçсисем те çавăн чухлĕ йышлăрах тытăнаççĕ.

Çавăнпа ĕнтĕ сурхи тырăсен калчине удобренисем сапса парас ĕçе кая хăвармасăр, пысăк тимлĕхпе туса пырас пулать. Вăрлăх участокĕсенче çак ĕçе уйрăмах тĕплĕ пурнăçламалла.

Чи малтан вăрлăх участокĕсем çине çĕрсе çитсе тăпраланнă тислĕк, хура тăпра, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекалие торфпа хутăштарса тунă компостсем тата тислĕк шĕвекĕ сапас пулать.

Вăрлăх участокĕсем çинчи тырăсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре уй-хире çумкурăксенчен тасатни пысăк вырăн йышăнать. Çумкурăксем — культурăллă ӳсентăрансен тăшманĕсем. Вĕсем тăпрари нӳре, тутлăхлă япаласене тырпултан туртса илеççĕ, хăйсем ӳссе кайса тырпула тĕттĕмлесе ӳсме чараççĕ.

Çавăнпа ĕнтĕ тырăсене çумкурăксенчен тасатсах тăрас пулать. Вăрлăх участокĕсем çинче çумкурăкĕ пачах ан пултăр. Вĕсем, тырăсене кирлĕ тутлăхлă япаласене тата нӳре пĕтерсе пынипе пĕрлех, вăрлăхлăх тырăн пахалăхне те сиен кӳреççĕ. Авăн çапнă чухне çумкурăк вăрри тырăпа хутшăнать, вăрлăхăн нӳрлĕхне ӳстерме пултарать. Çавна пула вăрлăха тасатас ĕç те нумай йывăрланать, пухса кĕртнĕ тырпула кĕркуннех акма юрăхлă кондицие çитерме чăрмантарать.

Çумкурăксем культурăллă ӳсентăрансенчен темиçе хут нумайрах вăрă тăваççĕ. Çав вăрăсем, тăкăнса юлса, уй-хире сăрăлаççĕ, тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пырас ĕçе сиен кӳреççĕ. Çапла вара çумкурăксене шăтса тухсанах çумласа пĕтерсе пырасси тырпул тухăçлăхне ӳстерес задачăпа тачă çыхăнса тăрать. Тырăсенчен уйăрма йывăр вăрăллă çумкурăксем вăрлăх участокĕсем çинче пачах пулмалла мар. Вĕсене халĕ çине тăрсах çумласа тăкмалла, вăрă тума памалла мар.

Тырăсем çинчен çумкурăксене çумласа тăнипе пĕрлех, вăрлăх участокĕсем çинчи акнă тырăн расна сорчĕсенчен ӳссе пулнă тунасене те тата ытти тырăсен тунисене те пĕтĕмпех кăкласа пăрахмалла. Тĕслĕхрен, «Ульяновка» кĕрхи тулă çинчи ыраш тунисене пурне те кăкламалла. Çавăн пекех ытти сорт кĕрхи тулăсен тунисене те кăкласа пăрахмалла.

Вăрлăх участокĕсем çинчи тырпулпа курăксен кĕлтисене анализ туса сорчĕсене тĕплĕн палăртас ĕçе (апробация) пысăк ответлăхпа туса ирттермелле. Нумай çул тата пĕр çул ӳсекен курăксене пурне те, вăл шутра вăрлăхлăх акнă викăна та, кăçал пĕтĕмпех апробацилемелле. Пур тĕрлĕ пĕрчĕллĕ тырăсене те, селекци сорчĕсемпе акнисене те, вырăнти сортсемпе акнисене те пĕтĕмпех пысăк пахалăхпа апробаци тумалла.

Вăрлăх участокĕсем çинчи тырпулпа курăксене пухса кĕртсен, çапса пуçтарсан тата тасатса вăрлăх фондне хывсан вăрлăх участокĕсенче çу каçа тунă ĕçсен итогĕсем палăраççĕ. Çак ĕçсене тĕрĕс туса пынинчен ĕнтĕ колхозсем вăрлăх фончĕсене ăнăçлă тăвасси килет. Тунă ĕçсен докуменчĕсене вăхăтра тĕплĕ çырса пымалла, пухса кĕртекен тырпула çирĕп учета илмелле, тырпула пухса кĕртес, çапса пуçтарас, тасатса сортлас ĕçсене кая юлмасăр туса пымалла. Вăрлăх участокĕсем çинче ӳстернĕ тырпула, кирек мĕнле майпа пухса кĕртмелле пулсан та, ытти тырăсенчен уйрăм пухса кĕртес пулать, уйрăм çапса илмелле, тасатса сортланă хыççăн уйрăм складсене хывмалла.

Колхозсемпе МТС-сен тырă виççе учета илекен работникĕсем вăрлăх участокĕсем çинчен пухса кĕртнĕ тырра тата курăксен вăррине уйрăм учета илмелле.

Кĕрхи тырăсен килес çулхи вăрлăх участокĕсене те халĕ уйăрса палăртмалла. Çав участоксем çине тăкма удобренисем çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла.

Сурхи тырăсен килес çул пулмалли вăрлăх участокĕсене кăçал, унта халĕ ӳсекен тырпула пухса кĕртнĕ хыççăнах, сӳхен сухаламалла, кун хыççăн кĕрхи çĕртме тумалла.

Н. ПЕТРОВ,
агроном.

Фельетон

Баланс тунă хыççăн...

«Гвардеец» колхоз правленийĕнче хĕрӳ ĕç пырать: черетлĕ лару. Колхоз председателĕн Николай Афанасьевичăн сасси уçă кантăкран урама янах илтĕнет.

— Сысна çурисене бракласа сутас, пĕр килограмм чĕрĕ висене... тенке парас. Кам çакăнпа килĕшет, алă çĕклĕр!

— Единогласно!

Сасăланă хыççăнах шăв-шав пуçланчĕ:

— Чи лайăххисене малтан хамăрăн суйласа илес!—кăшкăрать ревкомисси председателĕ Н. Сотников, тарланă çамкине шăла-шăла илсе.

— Конечно, хамăрăн илмелле, хамăр хуçа вĕт,—илтĕнет колхоз председатель заместителĕн И. Павловăн сасси.

Тепĕр кун пулать. Кăвак сутă килнĕ. Сысна фермин картишне çынсем васкавлăн пухăнчĕç. Кашниех хул хушшине пĕрер михĕ хĕстернĕ.

— Ку хама!—терĕ Николай Афанасьевич, чи мăнтăр çурине миххе ярса.

— Ку мана!—терĕç ыттисем те. Сысна çурисем çухăрнă сасă янăраса çеç тăрать. Унта пĕр-пĕр выçă кашкăр пырса кĕнĕ пулĕ, тейĕн.

Çапла вара колхоз председателĕ Н. Афанасьев 17 килограмлине, ревкомисси председателĕ Н. Сотников 9 килограмлине (вăл укçине халĕ те парса татман-ха), лаша фермин заведующийĕ М. Смирнов 22 килограмлине тата ыттисем те пĕр кун хушшинчех 103 çура илсе кайрĕç. Браклакан специалистсем курăнмарĕç вара...

— Эпĕ ирĕк памасăр текех никама та пĕр пуç та парса ямастăн!—хытăрларĕ председатель ферма заведующине М. Иванова.

Унччен те пулмасть, Иванов патне «разрешенисем» пыма пуçларĕç:

«Иванов М. Эсĕ Павлов П-на пĕр сысна çури парса яр! 13 V-53 ç. Колхоз предс. Н. Афанасьев».

«...Эсир Данилова И. сысна çури 2 (икĕ) пуç парса ярăр. 19 V-53 ç. Колхоз предс. Н. Афанасьев».

«Разрешенисен» вĕçĕ-хĕрри те çук:

«Иванов М. Эсĕ каллех парса яр-ха? Кайран татăлăпăр!..»

«Эсĕ (хушаматне паллă çырман.—Автор) какай парса яр!»

«Эсĕ сысна пустар пĕр штук, Хохлов валли».

«Эсĕ Марье аппана пĕр сысна çури парса яр!»

«Парса яр, парса яр!»—приказ хыççăн приказ çитет фермăна. Иванов ларатăра пĕлмест. Ĕç вĕресе кăна тăрать.

Тĕлĕнмелле! Фермăран сысна çури çеç те мар, какай та илме пулать иккен.

Сысна çурисене йӳнĕ хакпа сутса пĕтернĕ. Ферма заведующийĕ Иванов баланс тăвать: 128 сутнă, 27 вилнĕ, 8 çурине вăрласа кайнă—пурĕ 161 штук. Вилни çинчен акт çырать те висĕ çыншăн алă пусать.

Акă тепĕр баланс: пилĕк уйăх хушшинче колхозăн сыснисем планпа кăтартнинчен 62 пуç чакнă.

Халĕ ĕнтĕ, баланс тунă хыççăн, Н. Афанасьевпа Н. Сотников юлташсене ответ тытма «разрешени» парас пулать. Çитет вĕсене!

В. УХРУЛЬ.
(Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» хаçатран).

МАЛТА ПЫРАКАН ЯЛПО

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Штанаш ялповĕн (правлени председателĕ А. Ишмейкин) 13 магазин пур. Магазинсене ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем вăхăтра кӳрсе килеççĕ. Юлашки вăхăтра хуçалăхра кирлĕ таварсемпе культура таварĕсен хисепĕ ӳсрĕ.

Ялпо уйăх хушшинче икĕ квартал планне ирттерсе тултарнă.

А. САМСОНОВ.

ВЫРĂСЛА-ЧĂВАШЛА СЛОВАРЬ

Вырăс чĕлхи ССР Союзĕнче пурăнакан пур нацисемпе халăхсемшĕн те тăван чĕлхе пулса тăрать. Вăл пирĕн нумай нациллĕ Тăван çĕршывра коммунизм тăвас ĕçре ССР Союзĕнче пурăнакан мĕнпур халăхсене таччăн çыхăнтарма, вĕсене пĕр-пĕринпе хутшăнма пулăшать.

Вырăс чĕлхи ытти халăхсен наци чĕлхисене пуянлатать. Ăна пĕлни пирĕн çĕршыври халăхсене кăна мар, социализм çулĕ çине тăнă халăх демократи çĕршывĕсене те хăйсен форми енчен нациллĕ, содержани енчен социализмла культурине аталантарма, ăна татах та çӳлĕрех пусăма хăпартма пулăшать. Кунпа пĕрлех вăл ССР Союзĕнче пурăнакан тĕрлĕ нацисемпе халăхсене пĕр-пĕрин культурипе паллашма май парать. Çавăнпа та вырăс чĕлхине вĕрентес ĕçе партипе правительство уйрăмах пысăк вырăна хураççĕ.

Вырăс чĕлхине вĕренес ĕçре, ытти чĕлхесене вĕреннĕ чухнехи пекех, чи кирлисенчен пĕри — чĕлхери сăмахсен йышĕпе паллашасси. Мĕншĕн тесен, «сăмахсен йышĕ чĕлхе сăн-сăпатне кăтартса парать: сăмахсен йышĕ мĕн чухлĕ пуян та анлă, чĕлхе те çавăн чухлĕ пуян та анлă» (И. Сталин). Вырăс чĕлхи сăмах йышĕн пуянлăхĕ тĕлĕшĕнчен тĕнчери чи пуян та пысăк чĕлхесенчен пĕри пулса тăрать. Çавăнпа та вырăс чĕлхинчи сăмахсен йышне вĕренесси вырăс чĕлхине вĕренекенсен тĕп задачисенчен пĕри пулать.

Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçлама пулăшас шутпа кăларнă та ĕнтĕ «Вырăсла-чăвашла словаре». Словарь 1951 çулта Мускавра пичетленсе тухнă. Ăна Педагогика наукисен действительнăй членĕ, СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ Н. К. Дмитриев профессор редакциленĕ.

Вулакан шухăшĕсем

Чăвашсен чĕлхепе литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕ ку словаре хатĕрлесе питĕ пысăк та кирлĕ ĕç тунă. Словарь тухни — чăваш халăхĕн культура пурнăçĕнчи пысăк событи пулса тăрать.

Словарьте 45.000 сăмаха яхăн. Словарь хыçĕнче педагогика наукисен академийĕн действительнăй членĕ, СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ Н. К. Дмитриев профессорпа филологи наукисен докторĕ С. П. Горский çырнă чăваш чĕлхин грамматика очеркĕ пур. Словарьти сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарнă. Словарĕн вырăсла пайĕнчи сăмахсем çине ударенисем лартса панă, унсăр пуçне кашни сăмах мĕнле пуплев пайне кĕнине, хисеп тăрăх улшăннипе улшăнманнине тата чĕлхери ытти грамматика категорийĕсене те уйрăм паллăсемпе кăтартса панă. Çавăнпа пĕрлех хăшпĕр сăмахсемпе мĕнле стильре тата хăçан усă курнине те кăтартнă. Анчах хăшпĕр сăмахсен грамматика категорийĕсене кăтартса панисем хальхи вырăс литература чĕлхин нормисемпе килĕшсех тăмаççĕ. Ун пек тĕслĕхсем нумай мар, çапах та вĕсем, словарьпе усă куракансене тĕрĕс мар кăтартусем парса, хальхи вырăс литература чĕлхин нормисене вĕренсе çитме, вĕсемпе тĕрĕс усă курма чăрмантараççĕ. Вĕсем çаксем: кофе ср. р. (кирлĕ: м. р.), напéчатать, стрéчок (икĕ тĕрлĕ ударени лартса пани тĕрĕс мар), составúть (составлять сăмаха пăх; ударени тĕрĕс мар); çавăн пекех собственно, соответственно сăмахсене ăнлантарса пама илсе кăтартнă тĕслĕхсенче те çав сăмахсем мĕнле пуплев пайне кĕнине кăтартса панисене тĕрĕс теме çук. Словарьте кăтартса панă тăрăх, «Поступаю соответственно инструкции» предложенире «соответственно» н а р е ч и пулать мĕн, анчах та тĕрĕссипе вăл п р е д л о г пулать. Çавăн пекех «Волжский бассейн составляют собственно Волга и ее притоки» предложенире «собственно» вводнăй сăмах пулмасть.

Унсăр пуçне, чылай сăмахсене орфографи енчен тĕрĕс çырса кăтартман. Пуринчен ытла вĕсен шутне орфографи енчен пĕр вăхăтра тавлашуллă пулнă сăмахсем кĕреççĕ. Словаре пичетленĕ вăхăтра ку ыйтусем пирки килĕшсе татăлнă пулнă ĕнтĕ. Шкулсем валли кăларнă орфографи словарĕнче вĕсене çĕнĕ правилăсем тăрăх çырса кăтартнă. Çавăнпа та словаре çырса хатĕрлекенсем вĕсене тӳрлетме тивĕç пулнă. Кун пек сăмахсем çаксем: вправ, впридачу, врозницу, всердцах, всилу, вскладчину, втупик, встарину, вструнку, втиши, невпример (пĕтĕмпех уйрăм кирлĕ), разбить на голову (наголову кирлĕ), промакашка (промокашка кирлĕ), танцовальный (танцевальный кирлĕ) т. ыт. те.

Словарĕн чăвашла пайĕ çинче уйрăмах чарăнса тăрас пулать. Словарĕн паха енĕсенчен пĕри вăл унта куллен тухса тăракан хаçат-журналсенче час-часах тĕл пулакан обществăлла-политикăлла терминсене çителĕклĕ таран кĕртни тата вĕсене çителĕклĕ таран ăнлантарса пани. Ку енчен вăл кашни хаçат-журнал вулакан çыншăнах пит те хаклă кĕнеке пулса тăрать. Калас пулать, ку словарь вырăсла-чăвашла словарь çеç мар, вăлах ăнлантарса паракан словарь те. Пирĕн шутпа, çакă вăл словарĕн чи паха енĕ пулса тăрать. Словаре калаçура усă куракан тата илемлĕ литературăра час-часах тĕл пулакан нумай фразеологиллĕ сăмах майлашăвĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсем кĕртнĕ. Ун пек сăмах майлашăвĕсене ăнланасси—чăвашсемшĕн чи пысăк йывăрлăхсенчен пĕри. Çавăнпа та словаре çырса хатĕрлекенсене çав фразеологиллĕ сăмах майлашăвĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсене чăвашла куçарса е ăнлантарса парас ĕçе çителĕклĕ таран тĕплĕ тунăшăн ырламалла çеç.

Вырăс чĕлхинчи фразеологиллĕ сăмах майлашăвĕсене, пĕтĕмĕшпе илсен, ăнăçлă та тĕрĕс куçарнă. Вĕсенчен нумайăшне шухăшĕ енчен тĕл килекен чăвашла фразеологиллĕ сăмах майлашăвĕсемпе куçарнă, хăшпĕрисем мĕне пĕлтернине тата вĕсене хăçан каланине ăнлантарса панă. Анчах та уйрăм фразеологиллĕ сăмах майлашăвĕсене тĕрĕсрех куçарма та май пулнă. Пĕр-ик тĕслĕх:

Яблоку негде упасть—савăл çапса хĕстернĕ пек, ура пусма вырăн çук (тăвăр, хĕсĕк).

Знает как свои пять пальцев — пит лайăх пĕлет.

Когда рак свистнет—хăçан пуласси паллă мар.

Назвать вещи своими именами—тӳррипе (тĕрĕссипе, вăтанмасăр) кала.

Пирĕн шутпа, илсе кăтартнă тĕслĕхсене куçарса е ăнлантарса пани çителĕксĕр. Вĕсене уйрăм компонентсем тăрăх куçарнă пулсан, тĕрĕсрех пулмалла. Çавăн пекех хăшпĕр сăмахсене е предложенисене куçарнипе те тӳрех килĕшме çук. Акă, горлан, зевака, разиня, ротозей сăмахсене пĕтĕмпех «карма çăвар» тесе куçарнă. Анчах та тĕрĕссипе пĕрремĕш сăмахĕ çеç «карма çăвара» пĕлтерет. Çавăн пекех «простонародье» сăмаха «ахаль халăх» тесе, «малокровие» сăмаха «юн сахалли» тесе, грамматика очеркĕнче «ĕçчен» сăмаха «работоспособный» тесе (876 стр., «Слово и его состав») куçарнисене те тĕрĕс тесе шутлама çук. Аграрный, вермишель, вольно, сталинит сăмахсене ăнлантарса паман. Е тата уйрăм предложенисем илер:

Он жалко выглядит—вăл мĕскĕнĕн пăхать (тĕрĕсрех: вăл мĕскĕнĕн курăнать).

Вынести на своих плечах—пĕтĕм ĕçе пĕччен туса ирттерер (тĕрĕсрех: ху чăтса иртте) т. ыт. те.

Словарĕн чăвашла пайĕнче те орфографи правилисене пăхăнмасăр çырнă сăмахсем пур. Тĕслĕхсем:

Краснознаменный—хĕрлĕ ялав орденĕпе наградăланă (полк).

Краснофлотец—Совет тинĕс çар флочĕн салтакĕ.

Çавăн пекех «ăс тăнра» («феномен» сăмаха пăх), «кирлĕ-мара» (791 стр., çӳлтен 6 йĕрке) т. ыт. те. Пуринчен ытла пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене тĕрĕс мар куçарнисем нумай: ху-шса (343 стр., аялтан 24 йĕрке), юса-ни (355 стр., аялтан 11 йĕрке), выляканс-керсем (722 стр., аялтан 2 йĕрке) т. ыт. те.

Чăвашсен чĕлхепе литература тата истори тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев институчĕшĕн чăваш чĕлхин законĕсене тĕпчесе вĕренес ĕç тĕп ĕçсенчен пĕри пулса тăмалла. Вăлах пире чăваш чĕлхин калаçу тата çыру нормисене те пама тивĕç. Анчах та словарьте чăваш литература чĕлхине калаçу тата çыру енчен нормативлă тăвас сулăм çителĕксĕр. Хăшпĕр сăмахсене тăват-пилĕк тĕслĕ куçарса панă: çав сăмахсенчен хăшне литература чĕлхинчи сăмах тесе шутламалла, хăшне диалектизм тесе шутламалла—паллă мар. Пĕр-ик тĕслĕх:

Отчим—аçасури, аттеçури, ашшĕ çури, тăван мар ашшĕ.

Заточить—шĕвĕрт, вĕçлет, шӳретсе вĕçлет.

Мяч—мечĕк, пӳске, тупă.

Пирĕн шутпа, литература чĕлхинче усă курман сăмахсене уйрăм паллăсемпе кăтартма кирлĕ пулнă.

Словарьте чăваш чĕлхин грамматика стройĕпе килĕшсе тăман сăмах майлашăвĕсем те пур. Тĕслĕхрен: хăваланакан çын (гонимый), ĕçĕ пирки следстви пыракан çын (подследственный), кашни кун вăрçă пуçланса кайма пултаракан çĕршыв (пороховой погреб) т. ыт. те.

Юлашкинчен словарьти чи тăрăхтаракан çитменлĕхсем—опечаткăсем çинчен пĕр-ик сăмах калас килет. Ку шута кирлĕ çĕрте запятойсем çукки е кирлĕ мар çĕре запятойсем лартни, сăмахсене пăсса пичетленисем, саспаллисене сиктерсе хăварнисем, диакритически паллăсем лартни, уйрăм çырмалли сăмахсене пĕрле çырни е пĕрле çырмалли сăмахсен пайĕсене уйрăм çырнисем т. ыт. те кĕреççĕ. Тĕслĕхрен: «юланутпа» вырăнне «юканутпа» («шпора» сăмах), «тăррине» вырăнне «рăтрине» («усеченный» сăмах), «шăршлă» вырăнне «шăрислă» («духи» сăмах), «анчахрах» вырăнне «начахрах» (недавний), куллен хи житейский), шутсăрнумай (несметный) т. ыт. те. Эпир шутланă тăрăх, çавăн пек йăнăшсем словарьте пĕтĕмпе 200 ытла. Вĕсем уйрăммăнах чăвашла япăх пĕлекенсене е вырăс чĕлхи урлă чăвашла вĕренекенсене питех те чăрмантараççĕ.

Çапах та словаре юрăхсăр тесе шутлани тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Çитменлĕхсем нумай пулин те, словарь питĕ кирлĕ, хаклă кĕнеке пулса тăрать. Унпа усă куракан учительсемпе вĕренекенсем тата интеллигенцин ытти анлă сийĕсем те çак словаре хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекенсене чĕререн тав тăвĕç.

Л. ТЕРЕНТЬЕВ,
вырăс чĕлхипе литература преподавателĕ.

Элĕк районĕ.

Хĕрарӑмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕнче

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхи ларура Эжени Коттон доклачĕ тӑрӑх прениссем малалла пынӑ. Ҫакӑнпа пĕр вӑхӑтрах кун йĕркинче тӑракан пĕрремĕшпе иккĕмĕш ыйту тӑрӑх докладсене секцисенче сӳтсе явнӑ.

Делегатсем Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Изабелла Блюм тата Италири демократла хĕрарӑмсен представительници Мария Росси конгреса пырса ҫитнине хĕрӳллĕн саламласа йышӑннӑ.

Студентсен тĕнчери союзĕ ячĕпе Конгреса Де Сотте саламланӑ. Вӑл студентсем хӑйсен Пĕтĕм тĕнчери виҫҫĕмĕш конгресне тата ҫамрӑксемпе студентсен пĕтĕм тĕнчери тӑваттӑмĕш фестивальне хатĕрленни ҫинчен каласа панӑ. Студентсен тĕнчери союзĕ 72 ҫĕршыври 5 миллион ытла студента пĕрлештерсе тӑрать.

Председатель Испанирен илнĕ ҫырусене вуласа парать. Ҫак ҫырусенче Испани хĕрарӑмĕсем конгреса хӑйĕн ĕҫне ӑнӑҫлӑ туса пыма ырӑ сунаҫҫĕ.

Конгресра ҫавӑн пекех тата Суданри хĕрарӑмсен исполнительнӑй комитечĕн представительници ярса панӑ ҫырӑва вуланӑ. Ҫырура Суданри хĕрарӑмсем конгресс мире тата халӑхсем хушшинчи туслӑха ҫирĕплетес тĕлĕшпе тӑвакан ĕҫсене ырлани ҫинчен каланӑ.

Юрист-демократсен тĕнчери ассоциацийĕ ячĕпе конгреса Люсьенна Буффью саламланӑ.

Китай Халӑх Республикин представительници Чан Юн тухса калани пурне те хумхантарнӑ. Вӑл Китай халӑхĕн экономика, политика, культура пурнӑҫĕнче тунӑ ҫитĕнӳсем ҫинчен, хальхи вӑхӑтра ирĕклĕ Китай пурнӑҫĕнче хĕрарӑмсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен каланӑ.

Ларура ҫавӑн пекех тата Норвеги, Люксембург, Уругвай, Индонези, Голланди представителĕсем тухса каланӑ.

Кӑнтӑрла иртсен конгресс делегачĕсем комиссисемпе секцисенче ĕҫленĕ.

Каҫхи ларура докладсем тӑрӑх прени малалла пынӑ.

КОПЕНГАГЕН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхи ларура прениссем малалла пынӑ. Конгресс ĕҫне Изабелла Блюм (Бельги)—председатель пулса, Элиза Бранко (Бразили)—вице-председатель пулса ертсе пынӑ.

Малтан Австри представительници Зубик госпожа сӑмах илет.

Пакистан делегатки Махар госпожа империалистсем Пакистанран ҫар бази туса хума тӑрӑшни ҫинчен калать.

Оями госпожа Япони хĕрарӑмĕсен Америка оккупацийĕн тата ҫĕршыври милитаризацин йывӑр условийĕсенче пурӑнма тивни ҫинчен калать. Америка ҫарĕсем, тет вӑл, пĕтĕм Япони халӑхĕн социальнӑй пурнӑҫĕшĕн, унӑн моралĕшĕн хӑрушлӑх пулса тӑраҫҫĕ. Ҫĕршывра айӑплӑ ĕҫсем тӑвакансен шучĕ, проституци, намӑс чирĕпе чирлекенсен хисепĕ ӳссе пырать.

Франци представительници Марти Капгра госпожа Франци хĕрарӑмĕсем Хĕвеланӑҫ Германие ремилитаризациленине хирĕҫ, Вьетнамри вӑрҫа хирĕҫ, Корейӑри миршĕн, Францин Ҫурҫĕр Африкӑри колонийĕсенче демократи йĕрки туса хурассишĕн кĕрешни ҫинчен каласа парать.

Мария Торстейнсдоттир Исланди халӑхĕ Америка оккупацине хирĕҫ тата ют ҫĕршыв командованине пӑхӑнса тӑракан Исланди ҫарне туса хурассине хирĕҫ кĕрешни ҫинчен каласа панӑ.

Дани хĕрарӑмĕсен ячĕпе конгреса Хельмстед госпожа саламланӑ.

Моника Уэйтли (Англи) Англи колонийĕсемпе пӑхӑнса тӑракан ҫĕршывсенчи халӑх пурнӑҫĕ, уйрӑмах хĕрарӑмсен пурнӑҫĕ ҫинче чарӑнса тӑрать.

Верго госпожа (Реюньон утравĕ ҫинчи Франци хĕрарӑмĕсен союзĕн вырӑнти комитечĕн представительници) утрав ҫинчи хĕрарӑмсен правасӑр пурнӑҫĕ ҫинчен каласа панӑ. Утрава 15 семье тытса тӑрать. Вĕсем утрав ҫинчи мĕнпур банксене, промышленность предприятийĕсене, ҫĕре тытса тӑраҫҫĕ.

Румыни представительници Мария Чокань Румыни халӑхĕн пурнӑҫĕпе культури ҫинчен, Румыни ҫĕршывĕ кая юлнӑ ҫĕршывран малта пыракан ҫĕршыв пулса тӑни ҫинчен, ҫак ĕҫе хĕрарӑмсем активлӑ хутшӑнни ҫинчен калать.

Трибуна ҫинче—Югослави хĕрарӑмĕсен представительници Вера Ланиц. Вӑл Югославири работницӑсемпе хресчен хĕрарӑмĕсен хальхи режимри йывӑр пурнӑҫĕ ҫинчен каласа панӑ. Выҫлӑх, чухӑнлӑх пирки тата шкулсем сахал пирки ачасенчен 25 проценчĕ шкулсене ҫӳреме пултараймасть. Хӑшпĕр облаҫсенче ку хисеп 60 процента та ҫитет.

Маргарита де Понсе Аргентина хĕрарӑмĕсем политикӑлла ирĕклĕхпе пĕр тан правашӑн кĕрешни ҫинчен, вĕсем хӑйсен ачисене Корейӑра вӑрҫа вӑрҫма ярасшӑн мар пулни ҫинчен каласа парать.

Аргентина тата Бразили делегацийĕсем конгресс президиумне Ҫурҫĕр Корейӑри хĕрарӑмсем валли парнесем панӑ.

Де Блоккер госпожа Голландие милитаризациленĕ пирки тухса тӑнӑ йывӑрлӑхсем ҫинчен каланӑ. Де Блоккер шыв тулнӑ пирки хĕн-хур курнӑ Голланди халӑхне пулӑшнӑшӑн мĕнпур ҫĕршывсенчи хĕрарӑмсене тав тунӑ. Вӑл уйрӑмах Совет Союзĕпе Франци хĕрарӑмĕсене тав тунӑ.

Ирхи ларура юлашкинчен Дора Франко (Гватемала) сӑмах тухса каланӑ.

Корейӑри ĕҫсем

ХАЛӐХ ҪАРĔН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарĕн Главнӑй командованийĕ июнĕн 9-мĕшĕнче ҫапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче пур фронтсенче те пĕчĕк ҫапӑҫусем пулса иртнĕ.

Ӗнер ҫĕрле Америка авиацийĕ Пхеньянри мирлĕ халӑх пурӑнакан районсем ҫине, Ҫурҫĕр Пхенан провинцийĕнчи Чунхва, Енчжу ҫине тепĕр хут тапӑннӑ, вĕсем ҫине тискеррĕн бомбӑсем пӑрахнӑ. Мирлĕ халӑх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай, пурӑнмалли ҫуртсемпе землянкӑсене 200 ытла ишĕлтернĕ.

Халӑх ҫарĕн зенитнӑй чаҫĕсем паян тӑшманӑн 3 самолетне персе ӳкернĕ.

Корейӑра перемири ҫинчен пыракан калаҫусем

ПЕКИН, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран пĕлтернĕ тӑрӑх, Корейӑпа Китай делегацийĕ паян ҫакӑн пек пĕлтерӳ пичетлесе кӑларнӑ:

Перемири ҫинчен калаҫусем ирттерекен икĕ енĕн делегачĕсем тата штаб офицерĕсем июнĕн 9-мĕшĕнче хупӑ ларусем ирттернĕ.

Икĕ енĕн делегацийĕсен ҫитес пĕрлехи ларӑвĕ июнĕн 10-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пуҫланать.

Паньмыньжоньри лару ҫинчен Корейӑпа Китай делегацийĕ пĕлтерни

ПЕКИН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Паньмыньчжоньран Корейӑпа Китай делегацийĕ июнĕн 10-мĕшĕнче пичетлесе кӑларнӑ ҫакӑн пек пĕлтерĕве панӑ:

Июнĕн 10-мĕшĕнчи хупӑ ларура икĕ енĕн делегацийĕсем июнĕн 11-мĕшĕнчен пуҫласа пĕрлехи ларусене вӑхӑтлӑха чарса лартма йышӑннӑ. Кирлĕ пулсан ку ларусене тепĕр хут ирттерме тытӑнаҫҫĕ. Штаб офицерĕсем халиччен пекех хӑйсен ларӑвĕсене ирттереҫҫĕ.

Июнĕн 10-мĕшĕнче икĕ енĕн делегацийĕсен пĕрлехи ларӑвĕ пулнӑ хыҫҫӑн штаб офицерĕсен хупӑ ларӑвĕ пулнӑ.

США государство департаменчĕ пĕлтерни

ВАШИНГТОН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Государство департаменчĕ хаҫатсем валли панӑ заявленире ҫапла пĕлтернĕ: «Паньмыньчжоньра 1953 ҫулхи июнĕн 8-мĕшĕнче тыткӑнри ҫар ҫыннисем ҫинчен тунӑ килĕшӳ условийĕсене пурнӑҫлас шутпа, США, Пĕрлешнĕ нацисен командованийĕ ячĕпе, июнĕн 9-мĕшĕнче Швеци, Швейцари, Польша, Чехословаки тата Инди правительствисене вĕсен Вашингтонри миссийĕсем урлӑ асра тытмалли ҫыру ярса панӑ. Унта ҫав правительствӑсенчен: асӑннӑ килĕшӳ тӑрӑх нейтральнӑй ҫĕршывсенчен туса хума палӑртнӑ репатриаци тĕлĕшпе ĕҫлекен комиссие кĕрес тĕлĕшпе вĕсем хатĕр тӑраҫҫĕ-и, тесе, ыйтнӑ».

Государство департаменчĕ асра тытмалли ҫырӑвӑн текстне хаҫатсенче пичетлесе кӑларма панӑ.

КӐНТӐР КОРЕЙӐРИ АЧАСЕН ЙЫВӐР ПУРНӐҪĔ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Корейӑри тĕп телеграф агентстви Ли Сын Ман правительствин «социальнӑй ĕҫсен министерстви» пĕлтернĕ сведенисене парать. Вӑл сведенисем Кӑнтӑр Корейӑри ачасен пурнӑҫĕ йывӑрланса ҫитни ҫинчен калаҫҫĕ. Хальхи вӑхӑтра Кӑнтӑр Корейӑра ашшĕ-амӑшĕсĕр пурӑнакан ачасем 320 пин ҫынна яхӑн шутланаҫҫĕ. Вĕсенчен нумайӑшĕ Сеул, Пусан тата Тэгу хули урамĕсенче ыйткаласа ҫӳреҫҫĕ, пиншер ача япаласем вӑрласа пурӑнать. Ӳссе ҫитмен хĕрачасене Ли Сын Ман влаҫĕсем оккупантсемпе Ли Сын Ман ҫарĕн офицерĕсем валли уҫнӑ «савӑнмалли ҫуртсене» пухаҫҫĕ.

Ачасем нихҫанхинчен те нумай вилеҫҫĕ. Кӑнтӑр Корейӑра ҫуралнӑ кашни пин ачаран 200 ытла ача вилет. Шкулсем пĕрин хыҫҫӑн тепри хупӑнаҫҫĕ. Шкул ҫурчĕсене казармӑсем туса хунӑ. Ӗҫлесе тӑракан шкулсем те Ли Сын Ман чиновникĕсемшĕн пуймалли вырӑн кӑна пулса тӑраҫҫĕ. Шкула вĕренме кĕрес тесен, пĕр ача пуҫне «учительсемпе ҫыхӑну тытмалли обществӑна» тата ытти ҫавнашкал организацисене 40 пин вон укҫа тӳлемелле. Кунсӑр пуҫне тата вĕренекен ачан кашни уйӑхра ҫак организацисене вӑтамран 30-шар пин вон укҫа тӳлесе тӑмалла. Паллах, ҫакӑн чухлĕ нумай укҫа тӳлесе тӑма пултаракансем ҫĕршывра питех те сахал. Ҫурҫĕр Кенсан провинцийĕнче шкул ҫулне ҫитнĕ ачасенчен 20 процент кӑна вĕренме ҫӳрет. Ҫак ачасенчен 18 проценчĕ шкула выҫӑ пырать. Урок вӑхӑтĕнче вĕсем хӑш чухне тӑн ҫухатса ӳкеҫҫĕ.

МИР ПАКЧĔШĔН

БЕРН, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Миршĕн тӑракансен Швейцари комитечĕ Швейцари правительствине уҫӑ ҫыру ярса панӑ. Комитета Андрэ Боннар профессор ертсе пырать. Ҫырура правительствӑна пилĕк аслӑ держава хушшинче Мир Пакчĕ тӑвассишĕн тӑни ҫинчен пĕлтерме чĕнсе каланӑ.

«Ҫакӑн пек тунине,— тенĕ ҫырура,— пĕтĕм Швейцари халӑхĕ ырласа йышӑннӑ пулĕччĕ, меншĕн тесен вӑл паянхи ыйтусене вайпа усӑ курса мар, калаҫусем ирттернипе тата халӑхсем пĕр-пĕрне ӑнланнипе татса пама пуласса пĕлсе тӑрать».

ПĔТĔМ КИТАЙРИ ҪАМРӐКСЕН ИККĔМĔШ СЪЕЗЧĔ

ПЕКИН, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пекинра Пĕтĕм Китайри ҫамрӑксен иккĕмĕш съезчĕ уҫӑлнӑ. «Хуайжэньтань» залне Китай Халӑх Республикинчи тĕрлĕ партисемпе демократилле организацисене кĕрекен тĕрлĕ наци ҫамрӑкĕсем пухӑннӑ. Съезда 550 делегат тата хӑнасем нумай пухӑннӑ. Хӑнасем хушшинче демократилле ҫамрӑксен Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн представителĕсем, СССР, Европӑри халӑх демократи ҫĕршывĕсен, Корея, Вьетнам тата ытти ҫĕршывсен представителĕсем пур.

Съезда Пĕтĕм Китайри демократилле ҫамрӑксен федерацийĕн председателĕ Ляо Чэн-чжи уҫнӑ.

Киев хулинче спорт гимнастики енĕпе Совет Союзĕнче мала тухмалли ӑмӑрту пулса иртнĕ. Уйрӑм спортсменсем тата командӑсем мала тухассишĕн ӑмӑртнӑ. Спорт мастерĕ Г. Коновалова ӑмӑртура мала тухнӑ, гимнастика енĕпе ССР Союзĕн 1953 ҫулхи чемпионĕ ятне илнĕ.
УКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Г. Коновалова.
В. СЫЧЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Пионерсем лагерьте

Шупашкарти предприятисенче ĕҫлекен рабочисемпе служащисен ачисем Облпрофсоветӑн пионер лагерĕнче нумай канаҫҫĕ. Ҫак лагерь Ҫĕрпӳ хули ҫывӑхĕнче питĕ илемлĕ вырӑнта вырнаҫнӑ. Июнĕн 6-мĕшĕнче лагерь ĕҫлеме пуҫланӑ. Малтанхи сменӑра унта 300 ача ытла канать.

Лагерь пионерсене кĕтсе илме лайӑх хатĕрленнĕ. Ҫĕнĕ ҫуртсем туса лартнӑ, лагерь территорине хитрелетнĕ, спорт вӑййисем ирттермелли площадкӑна пысӑклатнӑ.

Кӑҫал пионер лагерĕнче пурĕ 1.100 ача канмалла.

А. АЛЕКСЕЕВ.

„Агитатор блокночĕн" черетлĕ номерĕ

КПСС Чӑваш обкомĕн пропагандӑпа агитаци пайĕ кӑларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 11-мĕш номерĕ пичетленсе тухнӑ. Унта Т. Егорова агрономӑн «Калчасене лайӑх пӑхса ӳстерер» ятлӑ статьи, Шупашкарти пир-авӑр фабрикинчи партбюро секретарĕ Н. Бронникова юлташ фабрикӑра чĕртаварпа материалсем ытларах перекетлессишĕн мĕнле кĕрешни ҫинчен каласа пани пичетленнĕ.

«Малта пыракансен опычĕ» ятлӑ пайра Чӑваш государство селекци станцийĕнчи паллӑ доярка О. Митрофанова мĕнле майпа кашни ĕнерен сĕт нумай суса илни ҫинчен каласа пани пичетленнĕ.

Кунсӑр пуҫне, агитаторсем валли калаҫусенче усӑ курма халӑх демократи ҫĕршывĕсенчи ĕҫсыннисен пурнӑҫĕ лайӑхланса пынине кӑтартакан цифрӑсемпе фактсем пур.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Государствӑн Уралти драма театрне Шупашкарта 45 кунлӑха пӳлĕмсем кирлĕ. Пӳлĕмсем Академи театрĕ ҫывӑхĕнче пулсан аван.

Ку ыйтупа кашни кунах кӑнтӑрла 3 сехет иртсен Чӑваш академи театрĕнче калаҫма пулать.

Италири парламент суйлавĕ

РИМ, июнĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Анса агентстви пĕлтернĕ тӑрӑх, Италин шалти ĕҫсен министрĕ Шельба паян каҫхине 6 сехетре суйлав ҫинчен хаҫат представителĕсене каласа панӑ.

Шельба ҫапла каланӑ: сенат суйлавĕ ҫинчен илнĕ сведенисем тӑрӑх, правительство блокне кĕрекен партисем 50 процентран ытларах сасӑ илнĕ пулмалла. Хальхи вӑхӑтра сенатри вырӑнсене уйӑрма сасӑсене шутлаҫҫĕ.

Шельба шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, христианла-демократла парти 40 процента яхӑн, коммунистсен партийĕ 20—21 процент, социалистсен партийĕ 12—13 процент, сылтӑм партисем 13 процент сасӑ илнĕ. Христианла демократсемпе пĕр блока кĕнĕ социал-демократсен партийĕпе либералсен партийĕ 7 процент сасӑ илнĕ.

Депутатсен палатин суйлавĕ пирки Шельба ҫапла каланӑ: икĕ пин суйлав участокĕнчен сведенисем килсе ҫитмен, ҫавӑнпа та депутатсен палатин суйлавĕ мĕнле пулни ҫинчен конкретлӑ кӑтартса пани ытла та ир пулнӑ пулĕччĕ.

РИМ, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита», «Аванти», «Паэзе», «Секоло д'Италиа» хаҫатсем депутатсен палатин суйлавĕнче христианла демократсен блокĕ 50 процент чухлĕ те сасӑ илеймени ҫинчен пĕрремĕш страницӑра пичетленĕ. Ҫапла ĕнтĕ, суйлав «реформипе» усӑ курмалла мар пулса тӑнӑ, депутатсен палатинче вырӑнсене пропорци йĕркипе уйӑраҫҫĕ.

Христианла-демократсен блокĕшĕн депутатсен палатин суйлавĕн результачĕсем сенат суйлавĕн результачĕсенчен те начартарах пулнӑ.

Сенат суйлавĕн результачĕсем христианла-демократла парти чылай сасӑсем ҫухатни ҫинчен, 1948 ҫулхи суйлавпа танлаштарсан, унӑн союзникĕсем те путланса ларни ҫинчен калаҫҫĕ. Христианла-демократсем 1948 ҫулта 48 процент сасӑ илнĕ пулсан, ҫак суйлавра 40,7 процент сасӑ кӑна илнĕ. Ҫавӑн пекех вĕсен союзникĕсем 1948 ҫулта 15,3 процент сасӑ илнĕ пулсан, халĕ пурĕ те 9,5 процент сасӑ кӑна илнĕ. Ҫав вӑхӑтрах Коммунистсен партийĕпе социалистсен партийĕ тата ытти демократилле вӑйсем («халӑх пĕрлӑхĕ» тата «нацин демократилле союзĕ») ҫак суйлавра 34,8 процент сасӑ, урӑхла каласан 1948 ҫулхи суйлавра илнинчен 1,5 миллион сасӑ ытларах пухнӑ. Вĕсем 1948 ҫулта 30,7 процент сасӑ илнĕ пулнӑ.

Ҫĕнĕ сенатра партисем ҫакӑн чухлĕ вырӑн йышӑннӑ: христианла демократсем 116 вырӑн (1948 ҫулхинчен 15 вырӑн сахалтарах), социал-демократсен партийĕ 4 вырӑн йышӑнать (1948 ҫулхи суйлав вӑхӑтĕнче 10 вырӑн йышӑннӑ пулнӑ), либералсен партийĕ 3 вырӑн йышӑннӑ (1948 ҫулта—9 вырӑн пулнӑ). Республиканецсен партийĕ иртнĕ суйлавра 6 вырӑн йышӑннӑ пулсан, халĕ сенатра пĕр вырӑн та йышӑнмасть.

Ҫав вӑхӑтрах коммунистсем, социалистсем тата демократсем иртнĕ суйлав хыҫҫӑн сенатра 72 вырӑн йышӑннӑ пулсан, халĕ 87 вырӑн йышӑнаҫҫĕ.

РИМ, июнĕн 10-мĕшĕ (ТАСС). Италин шалти ĕҫсен министерстви сенат суйлавĕн татӑклӑ итогĕсем ҫинчен пĕлтернĕ. Христианла-демократла парти 9.894.754 сасӑ (40,7 процент), социал-демократсен партийĕ 988.778 сасӑ (4,1 процент) илнĕ. Ҫапла вара правительство блокĕ пĕтĕмпе 12.196.158 сасӑ (50,2 процент) пухнӑ.

Коммунистсен партийĕ 5.080.143 сасӑ (20,9 процент), социалистсен партийĕ 2.929.906 сасӑ (12,1 процент) пухнӑ. Коммунистсен партийĕпе социалистсен партийĕн пĕрлехи списокĕ тӑрӑх 418.940 сасӑ (1,7 процент) илнĕ.

Оппозици 12.103.388 сасӑ (49,8 процент) илнĕ.

Шалти ĕҫсен министрĕ Шельба ĕнер каҫхине пĕлтернĕ тӑрӑх, центр партийĕсем сенатра 237 вырӑнтан 125 вырӑн йышӑннӑ. Христианла-демократла парти сенатра 116 вырӑн йышӑнать. Ытти вырӑнсем ҫакӑн пек пайланса тӑраҫҫĕ: Коммунистсен партийĕ—54 вырӑн илет, социалистсен партийĕ—28 вырӑн, коммунистсемпе социалистсен партийĕсен пĕрлехи кандидачĕсем—4 вырӑн, «Нацин демократилле союзĕ»—1 вырӑн, монархистсем—16 вырӑн, ҫĕнĕ фашистсем 9 вырӑн йышӑнаҫҫĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» тата «Дейли ньюс» хаҫатсем Италири суйлав результачĕсем пирки пӑшӑрханса ҫыраҫҫĕ.

«Дейли ньюс» хаҫат редакци ҫырнӑ статьяра ҫапла калать: Пĕрлешӳллĕ Штатсем Маршалл планĕ тӑрӑх тата пĕрпĕрин хӑрушсӑрлӑхне хӳтĕлемелли управлени урлӑ «Италие юлашки 5 ҫул хушшинче 6 миллиард доллар чухлĕ яхӑн экономика тата ҫар енĕпе пулӑшу панӑ». Анчах та, тесе ӳпкелешет хаҫат, ҫакӑн пек пысӑк пулӑшу панӑ пулсан та, «коммунистсем суйлавра пĕтĕм сасӑсенчен виҫҫĕмĕш пайне, 1948 ҫулхинчен ытларах сасӑ илнĕ». Ҫакӑн хыҫҫӑн де Гаспери депутатсен палатине тĕрĕслесе тӑма пултарас пирки ҫаплах иккĕленме тивет.

Сухӑр ытларах хатĕрлер

Халӑх хуҫалӑхне канифоль тата скипидар нумай кирлĕ. Вĕсене ӳсекен чĕрĕ хыртан пухса илнĕ сухӑртан тӑваҫҫĕ. Сухӑр канифоль тата скипидар тумалли хаклӑ чĕртавар пулса тӑнине ҫакӑнтан та аван курма пулать: унӑн продукцийĕпе металлургире, машиностроенире, хут тата тир-сӑран, пир-авӑр, строительство, нефть, лакпа краска, полиграфи, апатҫимĕҫ, парфюмери промышленноҫĕнче усӑ кураҫҫĕ. Кунсӑр пуҫне, скипидара медицинӑпа ветеринари учрежденийĕсем илсе тӑраҫҫĕ.

Сухӑр юхтармалли хыр вӑрманĕ питĕ нумай пулнӑ пулсан та, революциччен Российӑра сухӑр хатĕрлемен, мĕншĕн тесен патша правительстви ҫутҫанталӑк пуянлӑхĕпе усӑ курма, ҫĕршывӑн производительнӑй вӑйĕсене аталантарма тӑрӑшман. Канифольпе скипидара ют ҫĕршывсенчен илсе тӑнӑ.

Октябрьти Социализмла Аслӑ революци пулнӑ хыҫҫӑн сухӑр хатĕрлес тĕлĕшпе тĕпчев ĕҫĕсем анлӑн сарӑлса кайнӑ. Сӑнавсем пирĕн хыр вӑрманĕсенче пысӑк усӑ пама пултаракан промышленность отраслĕ тума май пуррине кӑтартса панӑ. 1926 ҫултан пуҫласа сухӑр хатĕрлес ĕҫ хӑвӑрт аталанма пуҫланӑ. Иккĕмĕш пилĕкҫуллӑх вĕҫленнĕ тĕле канифольпе скипидар тума сухӑр ҫĕршыва кирлĕ чухлех хатĕрлеме тытӑннӑ.

Чӑваш республикинче хыр вӑрманĕсем сахал мар. Пирĕн патӑрта сухӑр юхтарма 1927 ҫулта тытӑннӑ. Сухӑр ытларах хатĕрлес тесе, хыр вӑрманне сухӑр юхтармасӑр ӑсма чарнӑ. Чӑваш республикинчи химлесхозсем ҫултан-ҫул ытларах ĕҫлесе пынӑ. Вĕсем 1948 ҫулта сухӑр кӑларнине 100 процент шутлас пулсан, 1949 ҫулта ӑна 138 процент, 1950 ҫулта 220 процент, 1951 ҫулта 245 процент, 1952 ҫулта 251 процент хатĕрленĕ.

Сухӑр хатĕрлесси вӑйланни чи малтан ĕҫ меслечĕ лайӑхланса пынинчен, оборудованипе инструментсене тӑтӑшах лайӑхлатнинчен, малта пыракан технологие пурнӑҫланинчен тата социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарнинчен килнĕ.

Химлесхозсенче паллӑ стахановецсем нумайланса пыраҫҫĕ. Вĕсем ĕҫ тухӑҫлӑхне ҫултан-ҫул ӳстереҫҫĕ. Социализмла ӑмӑртура малта пыракансем сезонти нормӑна 150 процентран пуҫласа 200 процента ҫити тата унтан та ытларах тултараҫҫĕ. Вĕсен шутĕнче—Улатӑр химлесхозĕнчи И. Федотов, П. Кузовенков, Е. Петрунова, М. Друзина, С. Данилина, Д. Емелькина юлташсем, Шӑмӑршӑ химлесхозĕнчи В. Бибуков, Е. Заказова, А. Чамеева, В. Головачева, М. Заказова юлташсем. Кокшайск химлесхозĕнчи В. Бахтин, В. Захаров, В. Бахтина, Р. Сергеева, В. Иванова юлташсем пур.

Химлесхозсенчи нумай инженерсемпе техниксем производство планне ирттерсе тултарассишĕн, продукци пахалӑхне лайӑхлатассишĕн ӑнӑҫлӑ кĕрешеҫҫĕ. Акӑ вĕсем: Улатӑр химлесхозĕнчи производство участокĕн начальникĕ П. Мамонтьев юлташ, В. Машина, Ю. Кирьянов, А. Шихранов мастерсем; Шӑмӑршӑ химлесхозĕнчи И. Бочкарев, М. Бочкарев мастерсем; Кокшайск химлесхозĕнчи С. Котов тата А. Яшин мастерсем.

Ӗҫре хӑшпĕр ҫитĕнӳсем пур пулин те, ҫитменлĕхсем те сахал мар-ха. Сӑмахран, ҫĕнĕрен илнĕ рабочисене вĕрентессине кирлĕ пек организацилейменнине пула, нумай юлташсем ĕҫ нормине тултараймаҫ. Малта пыракан стахановецсен опытне тĕпчесе вĕренессине, ӑна производствӑна кĕртсе пырассине ҫителĕксĕр йĕркеленĕ. Сухӑр юхтарас ĕҫри техникӑлла правилӑсене пӑснисем те пулнӑ. Чылай участоксенче сухӑр пахалӑхĕшĕн сахал тӑрӑшнӑ. Хӑшпĕр участоксем рабочисене пурӑнма лайӑх условисем туса паман. Вĕсен культура ыйтӑвĕсене тивĕҫтерессине, уйрӑмах кино кӑтартас ĕҫе начар организациленĕ. Социализмла ӑмӑртӑва ертсе пырас ĕҫри формализма пĕтерсе ҫитермен. Химлесхозсенчи партипе профсоюз организацийĕсен кӑҫал ҫавӑн пек ҫитменлĕхсене тумалла мар.

Химлесхозсенчи рабочисем хушшинче суту-илĕве ОРС-сем тӑваҫҫĕ. Химлесхозсен участокĕсем пысӑк территори ҫинче вырнаҫнӑ пирки тата вĕсем халӑх пурӑнакан вырӑнсенчен, колхоз пасарĕсенчен инҫетре пулнӑ пирки, рабочисене апатҫимĕҫ, промышленность таварĕсем тӑратасси уйрӑмах ответлӑ задача пулса тӑрать. Анчах та уйрӑм ОРС-сем ответлӑха туймаҫҫĕ. Приволжски вӑрманпромхозĕн ОРС-ĕ (начальникĕ Елизаров юлташ) ку тарана ҫитсе те пекарня уҫман, вырӑна тухса ҫӑкӑр, ытти таварсем сутассине организацилемен. Ответлӑха ҫухатнине пула Кокшайск химлесхозĕнчи 8 участокри рабочисем тата вĕсен ҫемйисем таварсем татти-сыпписĕр илсе тӑраймаҫҫĕ. Производство планне тултарма чӑрмавсем ан пулччӑр тесе, химлесхоз хӑй ҫӑкӑр пĕҫерме пуҫланӑ. Ку ĕнтĕ, паллах, унӑн ĕҫĕ мар. РСФСР Вӑрман промышленность министерствин Чӑваш республикинчи УРС начальникĕ Никандров юлташ ОРС-ӑн киревсĕр ĕҫĕ ҫинчен пĕлет, анчах нимĕнле мерӑсем те йышӑнмасть.

Кӑҫалхи сезона химлесхозсем начар мар хатĕрленсе кĕтсе илчĕҫ. Вĕсен оборуровани, инструментсем, ĕҫ вӑйĕ ҫителĕклĕ. Мари тата Тутар республикисенчи химлесхозсемпе социализмла ӑмӑртӑва тухса, пирĕн республикӑри химлесхозсем планран ирттерсе 110 тонна паха сухӑр хатĕрлеме, промышленность валли срокчен сухӑр ярса пама, сухӑр пахалӑхне лайӑхлатма, ĕҫ тухӑҫлӑхне 10 процент ӳстерме, продукцин хӑйне ларакан хакне 2 процент чакарма, 500 пин тенкĕрен кая мар накоплени тума, производство планне пур кӑтартусем енĕпе те срокчен, Сталинла Конституци кунĕ тĕлне тултарма пулчĕҫ. Вырӑнти парти, совет тата профсоюз организацийĕсем куллен пулӑшса тӑрсан, химлесхозсем обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫлĕҫ, тӑванла республикӑсемпе пыракан ӑмӑртура малти вырӑна тухĕҫ.

Хальхи вӑхӑтра хĕрсех сухӑр юхтараҫҫĕ. План тӑрӑх, пирĕн республикӑра кӑҫал пĕлтĕрхинчен 8 процент ытларах сухӑр хатĕрлемелле. Малтанхи вунӑкунлӑхсенчи итогсем начар мар, пур химлесхозсем те плана ирттерсе тултарса пыраҫҫĕ. Анчах та ҫитĕнӳсемпе лӑпланса ларма юрамасть. Сухӑр юхтарасси сезонла ĕҫ, ӑна хатĕрлемелли вӑхӑт пĕтĕмпе те 115—120 кун кӑна. Ҫулталӑк планне ӑнӑҫлӑ тултарма кашни кунпа, кашни сехетпе туллин усӑ курмалла. Участоксенче ĕҫе тĕрĕс организацилени кирлĕ. Сухӑр юхтармалли графика, кашни кунхи ĕҫ нормине ҫирĕп пурнӑҫласа пымалла.

Партин XIX-мĕш съезчĕн директивисенче халӑх хуҫалӑхĕн пур отраслĕсене те, ҫав шутрах вӑрман хими промышленноҫне те малалла хӑвӑрттӑн аталантарма палӑртнӑ. Съездӑн историллĕ решенийĕсене пурнӑҫлассишĕн кĕрешсе, химлесхозсенчи рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллӑх плана ӑнӑҫлӑ тултарма пулӑшас тесе ырми-канми ĕҫлĕҫ.

П. ЖИКИН,
«Волгохимлес» трестĕн управляющийĕ.

Кизел ҫĕр кӑмрӑк бассейнĕнчи
Государство драма театрĕн
ГАСТРОЛĔСЕМ
«30 лет Чувашской АССР» клуб (Чапаевски поселок)
Июнĕн 20-мĕшĕнче—«**Ночной звонок**» (Д Слепян комедийĕ).
Июнĕн 21-мĕшĕнче—«**Поэма о любви**» (Мусрепов драми).
Спектакльсем каҫхине 9 сехетре пуҫланаҫҫĕ.
Билетсем июнĕн 13-мĕшĕнчен пуҫласа клубра сутаҫҫĕ.

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

хаҫат ҫырӑнса илĕр
«Союзпичет» уйрӑмĕсенче, кашни почтӑра хаҫат ҫырӑнса илме пулать. Письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаҫат-журнал сарма уйӑрнӑ ҫынсем — фабрикӑсемпе заводсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсенче тата МТС-сенче хаҫат илсе тӑма ҫырӑнтараҫҫĕ.
ХАҪАТ ХАКĔ:
1 ҫулталӑка—52 тенкĕ те 20 пус;
6 уйӑха —26 тенкĕ те 10 пус;
3 уйӑха —13 тенкĕ те 0,5 пус;
1 уйӑха — 4 тенкĕ те 35 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнӑҫ пайĕ—3-04, ялхуҫалӑх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, ҫырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.
НТ 01411 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20,000 экз.